Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 14 ВЫРСАРНИКУН 186 (4959) №

# Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АСС Республикĕн Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—87, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—49, парти пурнăç пайĕн—6—83, ялхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—2—88, промышленнăç пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, [illegible] — 6—23.

## Кашни колхозник хуçалăхĕнче ĕне пултăр

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕ ĕнесĕр колхозниксене ĕне усракан пулма пулăшасси çинчен декрет йышăннă пайăн 5 çул тултарать. „Эпир ĕнтĕ, большевиксем, пирĕн колхозниксем пурте ĕнеллĕ пулччăр тесе тăрăшăпăр“,— тенĕ Сталин юлташ колхозник-ударниксен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съездĕнче. Вăл 1933 çулта пулнă. Çав çулах, августăн 14-мĕшĕнче, партипе правительства—„Ĕнесĕр колхозниксене ĕне усракан пулма пулăшасси çинчен“ постановлени йышăнчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсемшĕн партипе правительства сталинла тăрăшнине колхозла ял хĕрӳлĕн тав туннипе кĕтсе илчĕ.

Ĕлĕк, Аслă Октябрĕ революцийĕ пуличчен, ĕнесĕр юлнă чухăн хресченĕн пăру туянас шухăш пулсан, унăн темиçе çул хушши кулак патĕнче ĕçлемеле пулнă, йе тата, кулакран пĕр пăру илсен, ушăн чухăн хресченĕн кайран пăру ӳстерсе ĕне туса памалла пулни çинчен аставакансем те кашни ялтах пур.

Колхозниксемпе колхозницăсене выльăх туянма партипе правительства пысăк пулăшу парса тăрать. Декрет йышăннăранпа пилĕк çул хушшинче пысăк ĕçсем тунă. Колхозниксемпе колхозницăсене выльăх туянма государства кивçен те нумай укçа панă. Вĕсем валли йăтарласа контрактациленĕ выльăхсене йӳн хакпа сутса тăнă.

Контрактаци тăрăх ӳстерсе пилĕк çул хушшинче республикипе пурĕ 32 пин пуç ытла ĕнесĕр колхозниксене пăрусем сутнă. Çавна май колхозниксемпе колхозницăсем усракан выльăхсен хисе ĕ çултан çула ӳссе пырать. 1935 çулта кашни 100 хуçалăх 101,8 пуç ĕне выльăхĕ усранă пулсан, 1937 çулта 111,6 пуçа çитнĕ. Чылай колхозсенче колхозниксене пурне те ĕне усракан туса çитернĕ.

Çав вăхăтрах, ĕне выльăхĕ туянма государства йĕнчен процентсăр кивçен укçа парса тата фермăсенчен пăрусем парса нумай пулăшса пынă пулсан та, ĕнесĕр колхозниксем республикăра чылайха. Çакна та палăртмалла, çĕнĕрен колхоза кĕрекенсенчен чылайĕшĕ ĕнесĕр. Ĕнесĕр колхозниксен шучĕ чакса пымасси çĕнĕрен колхоза кĕрекенсем çине ӳкет.

Тăшмансем çак ĕçре те сăтăр туса пынă. Çавăн пирки те ĕнесĕрлĕхе пĕтерес ĕçре пирĕн ӳсĕмсем çителĕклĕ мар-ха. Çакă вăл тата районсенчи парти, совет организацийĕсем ĕнесĕр колхозниксене ĕне выльăхĕ туянма пулăшасси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхманнинчен те нумай килнĕ.

Ĕнесĕр колхозниксем уйрăмăнах çак районсенче нумай: Вăрмар, Куславкка, Тăвай, Канаш, Куваккин тата Шăмăршă. Çапла пулсан та ку районсем ĕнесĕр колхозниксене ĕнелĕ тăвас тĕлĕшпе чăтма çук йăпăх ĕçлеççĕ. Куславкка районĕнчи „Çĕнĕ пурнăç“ колхоза 1937 çулта ĕнесĕр колхозниксем валли 1300 тенкĕ кивçен панă. Колхоз председателĕ Федăрăв çав укçа çинчен колхозниксене пĕлтермен те. Комаровкă ялĕнчи колхоз председателĕ ĕнесĕр колхозниксем валли банкран илнĕ пин тенкĕ укçана пĕр уйăх хушши хăй çумĕнче тăратнă та, кайран усă курмасăрах каялла тавăрса панă.

Канаш, Вăрмар, Тăвай тата ытти районсенче те çавăн пек фактсем пулнă. 1937 çулта Вăрмар районĕ ĕнесĕр колхозниксене пулăшма кивçен панă 52 пинрен 18 пин тенкипе çеç усă курнă. Тăвай районĕ 36 пинрен пĕр пин çеç илнĕ, Шăмăршă районĕ 21 пинрен пĕр тенкĕ те илмен.

„Пăрусене сутăн илес тата контрактаци тăвас ĕçе колхоз правленийĕсен туса пымала, ялсовет тата райĕçтăвком председателĕсен колхоз правленийĕсене çав ĕçре пурнĕнчен те пулăшса пымала, хăй колхозĕнче йе çывăхри районра пăру илмеле пулсан, суйласа илме пăру илекенсене те—колхозниксемпе колхозницăсене чĕнмеле“,— тенĕ партипе правительства 1933 çулти августăн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ.

Калас пулать, чылай çĕрте колхоз правленийĕсем çавăн пек туса пыман. Чылай районсенче райĕçтăвкомсемпе ялсоветсем тата колхоз правленийĕсем йĕнчен ĕнесĕр колхозниксене ĕне усракан тума чăннипех тăрăшса пулăшни пулман. Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çав йĕнĕпе пулнă сăтăрла ĕçсен йулăшкине хăвăрт пĕтерме тивĕçлине тăрăшман.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1938 çулхи государства планĕ ĕнесĕр колхозниксене 1938 çулта пурне те ĕне выльăхĕ усракан туса çитерме хушать. Çав шутпа ĕнесĕр колхозниксем валли 1938 çулта 10 пин пăру контрактацилеме палăртса панă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, райĕçтăвкомсемпе колхоз правленийĕсем хăйсен ĕçенче халех тăтăкла улшăну тумасан, çав ĕçлан хаљ пурнаçа кĕмесĕр йулас харушлăх умĕнче тăрать,—июлĕн 1-мĕшне республикипе мĕн пурĕ те 1562 пăру çеç контрактациленĕ.

Ĕнесĕр колхозниксене 1938 çулта пурне те ĕнелĕ туса çитерме кирлĕ условисем пирĕн пурте пур. Вăл çеç те мар, пирĕн Октябрĕ революцийĕ 21 çул тултарнă уйăхĕнче çав ĕçе пурнăçа кĕртсе çитерни́пе кĕтсе илес задача лартмалла. Хаљ пире чи кирли вăл—ĕнесĕр колхозниксене пулăшма чăннипех большевикла тăрăшни пулса тăрать. Райĕçтăвкомсен, ялсоветсен тата колхоз правленийĕсен кашни колхозрах ĕнесĕр колхозниксене пурне те тĕрĕс учота илсе вĕсене валли пăру йе ĕне илсе памалли́не халех палăртса хумалла. Ку тĕлĕшпе кашни районта, кашни колхозра кама ăçтан тата хăш вăхăтра пăру йе ĕне илсе памалли график пултăр, государства кивçен панă укçа пĕр пус та ĕçе каймасăр ан юлтăр.

Колхозсем пирĕн организаципе хуçалăх йĕнчен çултан çула çирĕпленсе пыраççĕ. Вĕсен колхозниксене выльăх туянма çеç мар, выльăхсене усрама çителĕклĕ выльăх апачĕ туса парас тата колхоз ĕçĕнче аван ĕçлекенсене кирлĕ пулсан выльăх усрамалли çуртсем лартас ĕçре пулăшма та тивĕçлĕ.

Колхозниксене пурне те ĕне тата ытти вак выльăх усракан тăвасси политикăлă пысăк задача. Çак задачăна кăçал татса хурассине малтанах районсенчи парти тата совет организацийĕсенчен килет. Çавăн пек пысăк ĕç тăрать хаљ парти тата совет работникĕсем умĕнче.

## Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумне пухасси çинчен

### Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн Президиумĕ йышăнни

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн VII-мĕш Пленумне 1938 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче Мускав хулинче, çак кун йĕркипе пухас:

1. Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн VI-мĕш Пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçа мĕнле кĕртни çинчен Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совет Президиумĕн докладĕ.

2. Профессилĕ союзсен типлă уставĕ çинчен.

3. Социаллă страховани совечĕсен ĕçĕсем çинчен.

Ленинградри „Электросила“ савăтри савăт комитечĕн тата Мускаври „Буревестник“ ятлă атă-пушмак хапрăкĕнчи хапрăк комитечĕн докладĕсем.

## Пай укçине кайала тавăрса парасси

Сурт-йĕр строительстви коопераци членĕсене пай укçисене кайала тавăрса парасси çинчен совет правительстви 1937 çулти октябрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă постановлени [illegible]. Унтанпа ĕнтĕ 10 уйăх иртрĕ. Шупашкар хулинчи сурт-йĕр управлени валли пай укçине членсене кайала тавăрса пама [illegible] 38 пулнă. Анчах сурт-йĕр строительстви коопераци членĕсем пулнисене пай укçине кайала тавăрса парасси начар пырать. Шупашкарти сурт-йĕр управленийĕ 1938 çулта [illegible] пай укçине пурĕ 125 пин тенкĕ кайала тӳлемеле. [illegible] 40 пин тенкĕ кăна тӳленĕ. [illegible] 1939 çулччен йăлтах тӳлесе пĕтерме палăртнă.

## ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ

## 1938 çулхи августăн 11-мĕшĕнче пулнă ларусен дневникĕ

### Союз Советĕнче

Августăн 11-мĕшĕнче ирхине Союз Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕнче ССР Союзĕн 1938 çулти пĕтĕм государства бюджетне сӳтсе явма пуçланă. Ку ыйтупа Бюджет Комиссийĕн Председателĕ депутат Çидăрăв доклад тăвать. Вăл, правительства тăратнă 1938 çулти государства бюджетне пĕтĕмĕшпех большевикла партипе совет влаçĕн политики тăрăх тата вĕсем çĕршыв индустриализацине çирĕплетес ĕç валли, ĕçсывăнисен материаллă тата культурăлă пурнăçне татах та çӳлерех çĕклес ĕç валли, совет государствин оборонă тĕрекне çирĕплетес ĕç валли мĕн май килнĕ таран нумайрах средствăсем мобилизацилеме кирли çинчен йышăннă решенисем тăрăх тунă,- тесе паллă тăвать.

Çидăрăв юлташ бюджетăн доход пайĕ çинчен чарăнса тăрать, вăл доход пайĕ иртнĕ çулхипе танлаштарсан 20 мĕлйард тенкĕ ытла пысăкрах. Доходсен тĕп çăлкуçĕ вăл—пĕрлештернĕ социалисăмлă хуçалăх дохочĕсем пулса тăраççĕ. Бюджетăн 90 процент ытла доходне хуçалăхăн пĕрлештернĕ секторĕ парса тăрать. Куйĕнтĕ пирĕн çĕршывра социализм пĕр чарăнса тăмасăр ӳссе пынине кăтартса парать.

—Вĕсен расчочĕсемпе сăлтавĕсене тĕплĕн тĕрĕслесе пăхнă хыççăн,—тет Çидăрăв юлташ,—Бюджет Комиссийĕ доходсене 1.594,8 мĕлйун тенкĕлĕх ӳстерме май килет тесе шутлать, вĕсене Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕ системин, Вырăнти промышленнăç Халăх Комиссариачĕ системин, Вăрман промышленнăç Халăх Комиссариачĕн спичкă промышленнăç системин оборочĕсем çине хуракан налога ӳстернипе, халăх вклачĕсене йавăçтарнипе т. ыт. ӳстерме пулать. Расхут пайĕнче Бюджет Комиссийĕ Йывăр промышленнăç Халăх Комиссариатне, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне тата ытти хăшпĕр халăх комиссариачĕсене паракан укçа-тенкĕ шутне пысăклатма сĕнет.

Прениссенче çак депутатсем тухса калаççĕ: Коротченко (УССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ), Кулиев (Азербайджан ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ), Пичугина (Мускав хулинчи Тагански райсовет председателĕ), Шагимарданăв (Башкир АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ), Попов (РСФСР Финанс Халăх Комиссарĕ), Курбанăв (Таджик ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ).

Союз бюджечĕн пăхса тухма тăратнă пройектне тухса калаçакансем пĕр кăмăллă пулса ырлаççĕ тата союзлă тата автономлă республикăсенчи социалисăм строительстви валли укçа-тенкĕ парса тăрас ĕç пĕр чарăнса тăмасăр ӳссе пынине паллă тăваççĕ. Совет Украинин бюджечĕ 1938 çулта 6 мĕлйард тенке çитет. Азербайджан республикин бюджечĕ 1933 çултипе танлаштарсан 4 хут ӳснĕ. РСФСР бюджечĕ 21,4 мĕлйард тенкĕ шутланать, çав вăхăтрах 1913 çулта патша Российĕн пĕтĕм бюджечĕ 2,5 мĕлйард тенкĕ çеç пулнă. Таджик СС Республикин бюджечĕ юлашки 10 çул хушшинче 20 хут ӳснĕ.

Депутатсем çавăн пекех тата промышленнăç, ялхуçалăх, культура строительстви ӳсĕмĕ валли паракан укçа-тенкĕ шучĕ ӳссе пынине паллă тăваççĕ.

Тухса калаçакансем çĕршыв оборонине тĕреклетес ĕç валли укçа-тенкĕ парасси çине пысăк тимлĕхпе пăхаççĕ.

—Эпир государства бюджечĕ çинчен тăракан ыйтăва калама çук ответлă сăмантра пăхса тухатпăр,—тет депутат Курбанăв.—Йапони войенщинин намăса сухатса Совет Союзне вăрçа туртса кĕме хăтланнине хирĕç пĕтĕм çĕршывра тарăхупа çиллĕ хумĕ вĕресе тăрать. Анчах Йапонири çар çыннисен ушкăнĕ йăнăшрĕ, хамăрăн аслă тăван çĕршывăн чиккисене сивĕччĕн сыхласа тăракан Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ Йапони самурайĕсене хăватлă урок пачĕ.

—Пирĕн бюджет,—тет депутат Коротченко юлташ.—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн аслă вăй-хăватне палăртса тăрать. Кирлĕ пулсан,—тет вăл,—эпир çĕршыв оборони ĕçĕ валли виççĕ хут, тăватă хут нумайрах укçа-тенкĕ хурăпăр.

### Национальнăçсен Советĕнче

Августăн 11-мĕшĕнче каçхине, ССРС Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра Национальнăçсен Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулнă, унта ССР Союзĕн 1938 çулти пĕтĕм государства бюджетне сӳтсе явма пуçланă.

Депутат И. С. Хохлов Бюджет Комиссийĕ содокладне туса панă.

Хохлов юлташ халăх хуçалăхĕ валли, уйрăм халăх комиссариачĕсем валли укçа-тенкĕ пани çинчен калакан цифрăсем илсе кăтартать. Вăл çакна уйрăмах паллă тăвать: ССРС Верховнăй Совечĕн Пĕррмĕш Çессийĕнче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Молотăв юлташ хăватлă Тинĕс-Çар Флочĕ тума, хамăр çĕршывăн оборонă тĕрекне çирĕплетме кирли çинчен кăтартса панисене бюджетра пурнăçа кĕртнĕ.

Социаллă-культурăлă строительства валли паракан укçа-тенкĕ шучĕ чылай ӳсет. Çапла халăха сутта кăларас ĕç валли кайакан расхутсен шучĕ 20 мĕлйард тенкĕрен иртет. Патша правительстви 1913 çулта халăха сутта кăларас ĕçшĕн 182 мĕлйун тенкĕ кăна расхутланă. Çаксем пурте ĕнтĕ хамăр çĕршыври халăхсен культура мĕн тери пысăккăн ӳссе пынине кăтартса парать.

Хохлов юлташ малалла государства бюджетне кĕртекен улшăнусем çинчен каласа парать. Бюджет Комиссийĕ доход пайне пĕр мĕлйард çурă ытла тенкĕлĕх ӳстерме май пур тесе шутлать. Комиссийĕ бюджетра доходсем тăрăх 126.777.693.000 тенкĕ, расхутсем тăрăх 125.277.693.000 тенкĕ туса, доходсене расхутсенчен мĕлйард çурă пысăкрах туса çирĕплетме ыйтать.

Прениссенче çак депутатсем тухса калаççĕ: Булганин (Мускав хула округĕ, РСФСР), Хоштарийа (Гагра округĕ, Абхази АССР), Кулагин (Слуцк хула округĕ, БССР), Аршуцян (Микойанăвски округ, Армйан ССР), Динмухаметăв (Ново-Шешминск округĕ, Тутар АССР).

Прениссенче тухса калаçнă депутатсем пурте пĕр кăмăллă пулса бюджет пройекчĕ ленинла-сталинла нации политикин аслă принципĕсене палăртса тăрать тесе, союзлă тата автономлă республикăсенчи хуçалăхпа культурăн пур пайĕсене те малашне татах ӳстерес ĕçе пурнăçа кĕртет, тесе калаççĕ.

Союзлă республикăсем ӳссе чечекленсе пынине депутатсем пахан та уçă цифрăсемпе кăтартса параççĕ.

Российă Федерацин бюджечĕ кăçал 21.400 мĕлйун тенкĕ—пĕлтĕрхинчен 13,5 процент пысăкрах шутланать. Сутта кăларас ĕç валли, сывлăха сыхлас ĕç валли, социаллă обеспечени валли паракан укçа-тенкĕ шучĕ калама çук пысăккăн ӳсет. Ку расхутсем Российă Федерацин пĕтĕм бюджечĕн 68.2 процентчĕ пулса тăраççĕ.

Грузи республикин бюджечĕ 1933 çулхипе танлаштарсан 4 хут ытла ӳснĕ. Грузи республикĕ—пысăк пахалăхлă хаклă техникăлă культурăсемпе специальнăй культурăсен республики. Чей акса тăвакан плантацисен лаптăкĕ 1938 çулта 42.043 гектара çити ӳснĕ. Грузи малта пыракан культурăлă республикăсен ретне тухрĕ.

Белорус СС Республикин бюджетне 1.167 мĕлйун тенкĕ тунă. Социаллă-культурăлă ĕçсем валли 830 мĕлйун тенкĕ—пĕлтĕрхинчен 21.2 процент нумайрах панă.

Тутар АСС Республикин бюджечĕ 1923 çулхипе танлаштарсан кăçалхи çул 60 хут ытла ӳснĕ. Вăл 364.2 мĕлйун тенкĕ шутланать. Вăл хисепрен 273,2 мĕлйун тенки, урăхла каласан 72 процентчĕ, социаллă-культурăлă ĕçсем валли каять.

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Булганин юлташ, аслă кайнă Йапони войенщинин тĕлĕшпе совет правительстви çирĕп те татăклă политика тытса пынине пĕтĕм совет халăхĕ хĕрӳллĕн саламлани çинчен каласан, пур депутатсем те тăвăллăн алă çупаççĕ.

(ТАСС).

## Хасан кӳлли районĕнчи событисем çинчен

ССР Союзĕпе Йапони хушшинче 1938 çулхи августăн 10-мĕшĕнче тунă килĕшӳ тăрăх августăн 11-мĕшĕнче 13 сехет те 30 минутра (вырăнти вăхăтпа) Хасан кӳлли районĕнче вăрçă ĕçĕсене чарса лартнă. Çарсен положенине паллă тума икĕ йĕнĕн представителĕсем августăн 11-мĕшĕнчех каçхине Заозернăйă (Чанкуфын) высотин кăнтăр йĕнче пĕррмĕш хут тĕл пулнă. Тата тепĕр хут тĕл пулма кăçалхи августăн 12-мĕшне 12 сехете палăртнă.

(ТАСС).

## Сывă пултăр пархатарлă Хĕрлĕ Çар!

### Вăрнарти Вăрманпромхоз, вăрманпункт, вăрманхоз рабочийĕсен служащисен тата инженерлă-техникла работникĕсен митингĕ йышăннă резолюци

Эпир, рабочисем, служащисем тата инженерлă-техникла работниксем, пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыв территорийĕ çине Йапони бандичĕсем кĕрсе ирсĕр провокаци тунине чĕререн тарăхса ылханатпăр. Эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр: Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ тата Хĕрлĕ Тинĕс-Çар Флочĕ, Йапонин фашисла бандичĕсене пĕрре çеç мар çапса салатнăскерсем, Йапони войенщинине халĕ те тĕп тумалăх çапса салатрĕ. Эпир хамăрăн правительствăран Йапони бандичĕсене хирĕç чи çирĕп те хăйăр мерăсем йышăнма ыйтатпăр. Эпир хамăр йĕнчен ĕçтухăçне хăпартса вăрман хатĕрлевĕн III-мĕш кварталти планне сентябрĕн 25-мĕшне мĕн пур ассортиментсем тăрăх тултарма пулăшатпăр. Хамăрăн пархатарлă Хĕрлĕ Çарăн тата Тинĕс-Çар Флочĕн хăватне хĕрӳллĕ пĕтĕм вăйпа хуратпăр.

Сывă пултăр пирĕн Рабочисемпе Хресченсен никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ!

## Тăвай районĕнчи допризывниксен конференцийĕ йышăннă резолюци

Йапони фашисĕсем пирĕн таса чиксем çине килсе тапăннине эпир чĕререн тарăхса пĕлтĕмĕр.

Йапони войенщинин çакна хăйĕн сăмси çине çырĕп çырса хутăр: эпир пурте, пĕр çын пек, хамăр тăван çĕршыва сыхлама тăма хатĕр.

Эпир хамăр правительствăран Йапони войенщинин пирки çирĕп мерăсем йышăнма ыйтатпăр. Фашиссем пирĕн тăван çĕршывăн вăйĕпе пултарулăхне хăйсен тирĕ çинче тӳссе пăхрĕç, совет халăхĕн çирĕпллĕхне тата моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхне туйса илчĕç.

Эпир, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ ялавлă фронтри паттăр бойецсене, командирсене тата политработниксене, ирсĕр тăшмана хăйăр отпор паракансене хĕрӳллĕн саламлатпăр. Эпир Совет правительствине çакăн çинчен тупа тăватпăр: Партипе правительства пĕрре чĕнсенех, эпир кирек хăш минутра та алла хĕçпăшал тытса тăшмансене пĕр хĕрхенмесĕр хăйсен территорийĕ çинчех çапса салатма хатĕр. Эпир фашиссен провокацине хирĕç ответлесе, хамăр çĕршывăн оборонă пултарулăхне тата ытларах вăйлататпăр, осоавиахим организацисене çирĕплетсе лайăхлататпăр, ворошиловла тĕл перекен пулатпăр, производствăра аван ĕçлетпĕр, займ укçине срукченех тӳлесе тататпăр. Большевикла сыхлăха вăйлататпăр, халăх тăшманĕсене пĕрне хăвармиччен тĕп тăватпăр, хамăр ĕçен пур отраслĕсенче те сăтăрлăх йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтеретпĕр.

Сывă пултăр Ленин—Сталин аслă партийĕ!

Сывă пултăр Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ!

Сывă пултăр хурçă нарком Ворошилов!

Сывă пултăр пирĕн тус, учитель, аслă çулпуç Сталин юлташ!

## Хасан кӳлли районĕнчи вăрçă ĕçĕсене чарса лартни çинчен йут çĕршывсенчи пичет мĕн çырать

### Франци

Совет Союзĕпе Манчжури чиккинче Хасан кӳлли районĕнчи вăрçă ĕçĕсене чарса лартни пирки çырнă умстатйара „Эр нувель“ хаçат çапла çырать: „Хăй татăклă та хăйула пулнине тата хăйĕн тивĕçлĕхне сыхланине кăтартса парса, Совет Союзĕ ĕç çине канăçлăн пăхма тата хăй мирлĕ пурăнăçшăн тăрăшнине кăтартса пама пĕлчĕ“.

Пĕлтерĕве илсен Йапони халăхĕ „çăмăллăн сывласа йачĕ“ текен телеграммăсене—курăнмала вырăнта пичетлесе кăларать.

„Травай“ хаçат çапла çырать: „Юлашки кунсенче вăйсене сăнаса пăхни йапонецсене çакна пĕр иккĕленмеле мар ĕнентерӳллĕн кăтартса пачĕ: Хĕрлĕ Çар хăвачĕ вăл—пурнăçра чăнах та пур хăват, унпа сыхланмăсан аванрах пулать. Ку вăл—миршĕн пысăк усăллă йапала“.

### Англи

Августăн 11-мĕшĕнче Лондăнра Лондăнри пĕтĕм профсоюз организацийĕнчен йанă делегатсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура резолюци йышăннă, вăл резолюцире Лондăнри профсоюзсен делегачĕсем „совет территорине туртса илме хăтланнă Йапони войенщинине отпор паракан Совет правительствине пулăшса тăмалла“ тенĕ. Юлашкинчен резолюци Англири пур ĕçсывăнисенчен те Совет правительствин мирлĕ политикине пулăшу парса тăма, ун хутне кĕме ыйтать.

### Чехословаки

Пĕррмĕш (Приморски) Çар штабĕ Совет Союзĕпе Манчжури чиккинчи лару-тăрусем çинчен пĕлтерни́нĕ тата Литвиновăн юлташ Йапони посолĕпе Сигемицупа çĕнĕрен тĕл пулни çинчен пĕлтернине Чехословаки пичечĕ курăнмала çĕрте пичетлесе кăларнă.

„Ческе слово“ хаçат: Совет Союзĕпе Манчжури чиккинчи конфликт Йапони çарĕ вăйсăррине тата Хĕрлĕ Çар вăйлă пулнине кăтартса пачĕ,—Совет Союзĕ Йапонин вăрçăлă провокацине хирĕç мĕнле татăклăн та хăйулăн тăнине кăтартса пачĕ, тесе паллă тăвать.

### Швейцари

Швейцари пичечĕ Токиори илнĕ телеграммăсене—Совет Союзĕпе Манчжури чиккинчи вăрçă ĕçĕсене чарса лартни çинчен калакан

### Румыни

Румынири пур хаçатсем те Литвинов юлташпа Йапони посолĕ Сигемицу çĕнĕрен тĕл пулни çинчен, çав тĕлпулура вăрçă ĕçĕсене чарса лартасси çинчен килĕшӳ туни çинчен ТАСС пĕлтернине шултăра заголовоксем парса пичетлесе кăларать. „Информация“ хаçат çапла çырать: „ССР Союзĕпе тытăçса пăхса, Йапони хăйне мĕн кĕтнине ăнланса илчĕ. Вăл кайала чакать, „мирлĕ пурнăçа“ тĕлĕнмеле „юратнине“ кăтартса парать тата Совет Союзĕпе килĕшӳ тăвать. ССР Союзĕн çар хăвачĕпе економикă хăватне шута илсе, çакна калама пулать: Йапонийе тĕлпипех пĕтересе хупă пулĕччĕ. ССР Союзĕ пайăн пĕтĕм халăхсемшĕн тата тĕнчери цивилизацишĕн пысăк усăллă ĕç турĕ“.

### Испани

Каталонири пĕрлешӳлĕ социалисла партин „Рамбла“ ятлă хаçачĕ Йапони войенщинин Инçет-Хĕвелтухăçĕнче совет чикки çине тапăннă пирки çырнă статйара çапла калать: „Хĕрлĕ Çар Йапони фашисăмне хăратса чĕтретмеле урок пачĕ тата вăрçăри мĕнле каталмаллине кăтартса пачĕ“. Совет Союзĕпе Манчжури чиккинчи вăрçă ĕçĕсене чарса лартни çинчен Испанири пур хаçатсем те, пĕр кăçат юлми тарăнах, пĕлтереççĕ.

(ТАСС).

## Китайри вăрçă

[illegible]

(ТАСС).

*ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ*

# Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн 1938 çулти пĕтĕм государствă бÿджечĕ çинчен

## ССР Союз Финанс Халăх Комиссарĕ А. Г. ЗВЕРĔВ йулташ доклачĕ*)

Йулташсем! Совет Союзĕн 1938 çулти бÿджетне ССР Союз Верховнăй Совет депутачĕсемпе сÿтсе йавасси пирĕн çĕршывра политикăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен калама çук пысăк çĕкленÿ пулнă вăхăтра пулса иртет.

Йулашки вăхăтри икĕ пысăкран та пысăк событи—çĕнĕ Сталинла Конституцине йышăнни тата унăн тăрăх ССР Союзĕн, союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлани—Совет Союзĕнче социализăм тунă аслă çĕнтерÿсен итогĕсене пĕтĕм тĕнче умĕнче демонстрацилесе пачĕ.

Суйлавсен вăхатĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ тунă чаплă çĕнтерÿ совет халăхĕн моралĕ-политикăлă пĕрлĕхне, парти массăсемпе пĕр уйăрăлми çыхăнса тăнине тата ĕççыннисен йышлă массисем Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чун-тан-чĕререн йуратса тăрăшнине уççăн палăртса парать.

Сталинла Конституци социализăмăн аслă çĕнтерĕвĕсене саккунласа çирĕплетсе хучĕ. Производствă орудийĕсемпе хатĕрĕсен социалисăмлă харпăрлăхĕ пирĕн обшчĕствăлă стройăн никĕсĕ пулса тăрать.

Халăх тăшманĕсене пĕр хĕрхевÿсĕр пĕтерсе пырса, социалисăм строительствин пур участкисенче те йертсе пыракан ĕçе çĕнĕ, çамрăк кадрсене йавăçтарса, вĕсене болшевисăмпа хĕçпăшаллантарса, пирĕн парти социалисăм строительствин мĕн пур фрончĕсенче калама çук пысăк çитĕнÿсем турĕ.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе икĕ пилĕкçуллăхсем хушшинче пирĕн кайа йулнă, çĕрĕçлĕ çĕршыв хăватлă, индустрилĕ державă пулса тăчĕ, вăл малта пыракан ăслăлăхпа-техникă çĕршывĕ, малта пыракан социалисăмлă йалхуçалăх çĕршывĕ пулса тăчĕ. ССР Союзĕнче промышлĕнноç продукцин 80 процентне ытла—сталинла икĕ пилĕкçуллăхсем хушшинче йăлтах çĕнĕрен тунă, йе пĕтĕмĕшпех реконструкциленĕ предприйатисем туса кăларăççĕ. Вăрçăччени виçепе танлаштарсан, социалисăмлă промышлĕнноç производстви 1937 çул тĕлне 8 хут ÿсрĕ.

Промышлĕнноç производстви виçи йенчен патша Россиĕ тĕнчере 5-мĕш вырăнта, Йевропăра 4-мĕш вырăнта тăнă; Совет Союзĕ индустри продукцине кăларас тĕлĕшпе халĕхи вăхăтра Йевропăра 1-мĕш вырăн тата тĕнчере 2-мĕш вырăн йышăнса тăрать. Ĕнтĕ 1936 çултах пирĕн çĕршыв машинăсем, трактăрсем, комбайнсем, грузовой автомобилсем туса кăларас, тимĕр тăпри тупас, хура пăхăр шăратас, суперфосфат, çавăн пекех сахăр тата ытти чылай продуктăсем туса кăларас тĕлĕшпе Йевропăра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Социалисăм хулари тата йалти ĕççыннисен пурнăç йăлине кĕчĕ.

Колхоз стройĕ йалта йалхуçалăхне вăйланма калама çук пысăк малашлăх уçса пачĕ, йалхуçалăхĕ Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тырă тăвасси çинчен панă заданине пурнăçа кĕртесси патне шанчăклăн пырать.

ССР Союзĕнчи ĕççыннисене телейлĕ, савăнăçлă, пуйан пурнăç туса пани—социалисăмăн аслăрах та аслă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать.

Пирĕн çĕршывра ĕçлев, кану, вĕренÿ, ватăлсан тата ĕçлейми пулсан пурăнмашкăн пулăшу илмели правасем пурнăçа кĕнĕ. Социалисăм принципĕ—„кашниччен унăн пултарулăхне кура, кашнине—унăн ĕçне кура“ текен принцип пурнăçа кĕнĕ. Обшчĕствăна социалисăмла çĕнетсе улăштарас ĕçре епĕр аслăран та аслă çитĕнÿсем турăмăр, мĕншĕн тесен пирĕн пĕтĕм ĕçе халăхсен аслă çулпуçĕ—Сталин йулташ йертсе пырать. (Пурте ура çине тăраççĕ. „Аслă Сталина—урра!“, „Сывă пултăр Сталин—урра!“ тесе кăшкăраççĕ. Нумайччен алă çупаççĕ).

Социалисăмлă обшчĕствă туса çитермели пĕтĕм тĕнчипе историлĕ задачăна татса панă çĕрте совет финансне вăйлатас тата тĕреклетес йенĕпе тунă çитĕнÿсем çав тери пысăк вырăн йышăнса тăчĕç.

Икĕ пилĕкçуллăхсем хушшинче промышлĕнноçа, йалхуçалăхне вăйлатма, културăна çĕклеме тата ĕççынни массисен материаллă пурнăçне лайăхлатма, çавăн пекех тата çĕршыв оборонине вăйлатма государствă бÿджечĕпе вырăнти бÿджетсем урлă кăна 350 мĕлйард тенкĕ йахăн укçа панă.

Икĕ пилĕкçуллăхсем хушшинче халăх хуçалăхĕ валли çеç 183 мĕлйард тенкĕ укçа расхутланă, социаллă-културăлă ĕçсем валли 73,3 мĕлйард тенкĕ укçа панă.

Çапла ĕнтĕ—бÿджет расхучĕсенчен 70 процентчĕ ытла халăх хуçалăхĕпе културă ĕçне кайнă.

### 1936 çулти бÿджетпа усă курнин итогĕсем

1936 çулта, Сталинла Конституцине пĕтĕм халăхпа сÿтсе-йавса йышăннă тата стахановла йухăм сарăлса пынă май массăсен ĕç хастарлăхĕ çĕкленнипе, халăх хуçалăх планне тултарнă çеç мар, тата иртерсе тултарнă.

Халăх хуçалăх планне ăнăçлăн тултарни государствă бÿджетне пурнăçа кĕртнипе палăрса тăрать.

ССР Союзĕн государствă бÿджетне 1936 çулта доходсем йенĕпе 83.760 мĕлйун тенкĕлĕх, расхутсем йенĕпе 81.827 мĕлйун тенкĕлĕх пурнăçа кĕртнĕ. 1936 çулта доходсене расхутсенчен 1.933 мĕлйун тенкĕ иртерсе тултарнă.

Халăх тăшманĕсем финанс системине сиен тунă пулсан та, 1937 çулта Совет Союзĕн финанс хăвачĕ чылай ÿсрĕ.

1937 çулхи отчот тăрăх государствă бÿджетне доходсем йенĕпе 96,6 мĕлйард тенкĕлĕх, расхутсем йенĕпе—93,9 мĕлйард тенкĕлĕх тултарнă, доходсем расхутсенчен 2,7 мĕлйард тенкĕ ытларах пулнă.

Çапах та çакна калас пулать: доходсем расхутсенчен иртсе кайнă пулсан та, оборотран илекен налог, тупăшсенчен шутласа илекен укçа-тенкĕ, государствă займĕсем тата халăхран пухакан налогсем йенĕпе доходсен планне тултараймарăмăр. Ку вăл, пĕр йенчен, халăх хуçалăхĕн уйрăм отраслĕсем хăйсен производствă планĕсене тултарайманнинчен, тепĕр йенчен, финанс аппарачĕ йапăх ĕçленинчен тата финанс системинче пулнă сăтăрлăхран килнĕ. Финанс органĕсенче йертсе пырас ĕçе хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсем ĕлĕкхи пек тепĕр хут капиталисăм туса хурас тĕллевпе пирĕн государствăн финанс хăватне ишĕлтерес, финанс хуçалăхне йĕркерен кăларас, бÿджет дисциплинине тата государствă укçи-тенкипе мĕнле усă курнине контрол туса тăрассине пăтратса йарас тесе, пур майсемпе те тăрăшнă.

Совет разведкин органĕсем Николай Иванăвич Йежов йертсе пынипе халăх тăшманĕсене тата вĕсен контрреволюцилĕ ĕмĕчĕсене аркатса каймалах çапса салатрĕç. (Пурте ура çине тăраççĕ. „Николай Иванăвич Йежова—урра!“ тесе кăшкăраççĕ. Тăвăллăн алă çупаççĕ). Анчах та, троцкисла-бухаринла бандăна çĕмĕрсе тăкни—пытанса йулнă троцкисла-бухаринла кайăшсем тата фашисăмăн ытти агенчĕсем коммунисăм обшчĕствин малашнехи строительствă ĕçне сăтăр тума хăтланассине пĕтерсе хунине пĕлтермест-ха. Сталин йулташ пире: „капиталисăмлă йĕри-тавралăх пур чухне пирте йут çĕршыв государствисен агенчĕсем пирĕн тылсене йарса тăракан сăтăрçăсем, шпионсем, диверсантсем тата çынвĕлеренсем пулаççĕ“ тесе вĕрентет. Çак вăл халиччен тăрă шыв çине кăлармасăр йулнă халăх тăшманĕсен йулашкисене тăпăлтарса кăларас тата сăтăрлăхăн мĕн пур йулашкийĕсене йăлтах пĕтерсе хурас йенĕпе финанс системинче те кунсеренех ĕçлесе пымалине пĕлтерет.

Совет Союзĕн 1938 çулти государствă бÿджечĕ — виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕнчи бÿджечĕ—Совет Союзĕнче социалисăм строительствине малала вăйлатса тĕреклетсе пымалла тăвать. Ăна халăх хуçалăхне ÿстермели государствă планĕпе килĕшÿллĕн тунă. 1938 çулти план тăрăх тĕп строительствă ĕçĕсене 38,3 мĕлйард тенкĕлĕх тумалла. 1937 çулта мĕн чухлĕ тултарнипе танлаштарсан, тĕп строительствăна йаракан укçа-тенкĕ 30 процент ытла ÿсет.

Йăвăр промышлĕнноçа тата машинăсем тунă çĕре йаракан укçа-тенкĕ кăçал пĕр хут çурă ытларах ÿсет. 1938 çулти план тăрăх, Союзри тата республикăсенчи промышлĕнноç кăларакан пĕтĕм продукцине 87,5 мĕлйард тенкĕлĕх палăртнă (1926/27 çулсенчи улшăнман хаксемпе), 1937 çулпа танлаштарсан, вăл 21 процент ÿсет.

Промышлĕнноç продукции ÿсемĕ ĕç тухăçлăхĕ чылай ÿснĕ шутпа пулса пырать, вăл ĕç тухăçлăхĕ 1937 çулпа танлаштарсан йăвăр промышлĕнноçра 14,4 процент, çăмăл промышлĕнноçра—11 процент, апат-çимĕç промышлĕнноçĕнче—11 процент ÿсет.

Промышлĕнноçпа йалхуçалăх продукци ÿсни таварçаварнăшне 1937 çулта 125 мĕлйард тенкĕ пулнă çĕртен 1938 çулта 140,5 мĕлйард тенкĕ таран, урăхла каласан—15,5 мĕлйард тенкĕлĕх ÿстерме май парать.

Промышлĕнноçпа йалхуçалăх производстви ÿсни, таварçаварнăшĕ ÿсни, куллен кирлĕ таварсен хакĕсене йÿнетни Совет Союзĕнчи халăх массисен пурнăç условисене малала та чылай лайăхлатмала тăваççĕ. Кун çинчен рабочисемпе служăшчисен ĕçукçи фончĕ ÿсни те калать, вăл фонд 1937 çулта 82 мĕлйард тенкĕ пулнă, 1938 çулта 94 мĕлйард тенкĕ таран ÿсет.

Халăх хуçалăхĕн 1938 çулти кăтартăвăсем бÿджета çав тери пысăккăн ÿстерме паха условисем туса параççĕ. ССР Союзĕн пĕтĕм государствă бÿджетне (Союзăн, республикăсен тата вырăнти бÿджетсем) доходсем йенĕпе 125.184 мĕлйун тенкĕ, расхутсем йенĕпе—123.684 мĕлйун тенкĕ палăртнă. Доходсем расхутсенчен 1,5 мĕлйард тенкĕ ытларах пулаççĕ.

Доходсем расхутсенчен калама çук нумай иртсе кайнă факт пит те кăтартулă. Капиталисăмлă çĕршывсен бюджечĕсенче чылай çулсем хушши ĕнтĕ доходсем расхутсене саплама çитсе пыман вăхăтра, социалисăм çĕршывĕн бÿджечĕ çулсеренех доходсем расхутсенчен чылай иртсе кайнипе пурнăçа кĕрсе пырать.

Капиталисăмлă çĕршывсенче епĕр урăх картинă куратпăр.

Капиталисăмлă государствăсем, уйрăмах фашисла государствăсем, хăйсен расхучĕсене çĕнĕ тĕнче вăрçи пуçласа йама хатĕрленнĕ çĕре тата халĕхи вăхăтра Китайпа Испанире пыракан вăрçăпа интервенци валли йарса нумай ÿстереççĕ. Çав вăрçăсем çар расхучĕсене питĕ нумай ÿстерме ыйтаççĕ тата капиталисăмлă государствăсен финансĕсене калама çук начарлатса çитереççĕ, ку вăл государствă кивçенĕсем çав тери нумайланнинчен, вĕсен бÿджечĕсем йаланах хирĕ-хирĕç витĕнейменнинчен, социаллă-културăлă ĕçсем валли йаракан расхутсене—ахаль те пĕчĕк расхутсене—татах пĕчĕклетсе хăварнинчен курăнать.

Çапла, Англи пресси пĕлтернĕ тăрăх, Германире 1937—38 çулсенче пĕтĕм расхутсем 23,0 мĕлйард маркă пулнă пулсан, çар расхучĕсем 15,5 мĕлйард маркă шутланаççĕ, йе вăл пĕтĕм расхутсенчен 67,3 процент пулать.

1938—1939 çулти бÿджет çулĕнче Германире хĕçпăшалланас ĕç валли расхутсем 18 мĕлйард маркăна çитессĕ. Германире çар расхучĕсене калама çук пысăккăн ÿстернĕ пирки ĕççынни массисем çине хуракан налогсене вăйлăн пысăклатаççĕ. Çапах та ĕççыннисен пурнăçне йăвăрлатмали налог прессинĕ темле хĕссен те Германин государствă бÿджетĕнчи доходсем расхутсене çулран çулах витсе пырайманнине йусаса йама пултараймасть, государствă кивçене кĕресси тата кĕске сруклă кивçене кĕресси ÿссе пынине чарса лартма пултараймасть, çавăн пек кивçене кĕни, Англи пресси пĕлтернĕ тăрăх, фашисăм пуçпулса пурăннă вăхăтра 1933 çулта 9,8 мĕлйард маркă пулнă çĕртен 1938 çул пуçланнă тĕле 38 мĕлйард маркăна çити ÿснĕ.

Ытти икĕ фашисла агрессăрсен—Италипе Йапонин—финансĕсем те Германи финансĕсенчен кайах мар тĕртĕксе çитнĕ.

Италин официаллă сведенийĕсем тăрăх, фашисла правительствă йулашки 4 çул хушшинче Абиссинипе Испанири вăрçă авантюри валли пĕтĕмпе 39 мĕлйард лирă расхутланă. Вăрçă расхучĕсене саплама ирĕксĕрлесех илтерекен займсене темиçе те кăларнă. Çакăн пек ирĕксĕрлесе туса иртернĕ ытти кредит операцисене пула, Итали государстви кивçене кĕни халĕхи вăхăтра 200 мĕлйард лирăна çитет (1930 çулта 89 мĕлйард лирă пулнă).

Йапони империалисăмĕн вăрçă авантюрисем те государствă финансне аркатса йарасси патне хăвăрт илсе пыраççĕ тата Йапонире укçа çÿрессине пăтратса йараççĕ.

Йапони империалисăмĕ йут çĕрсене туртса илес ĕмĕтпе Китайра пуçласа йанă вăрçă çар расхучĕсене калама çук нумай ÿстерме ыйтать. Ун çинчен çак факт та лайăх каласа парать: Йапонире 1938—39 çулсенче йаланхи бÿджетран тата хушса тунă бÿджетран çар расхучĕсем валли йаракан укçа 6,1 мĕлйард йиен шутланать, йе вăл бÿджетри пĕтĕм расхутсенчен 79 процент пулать. Халăха çутта кăларас ĕç валли пит сахал укçа—144 мĕлйун йиен расхутлаççĕ, йе вăл пĕтĕм расхутсенчен 1,8 процент пулать.

Йапони государствăшĕнче кивçене кĕни халĕх ĕнтĕ 13 мĕлйард йиена çитет (1931 çулта 4,5 мĕлйард йиен пулнă), урăхла каласан, 7 çул хушшинче вăл кивçенлĕх виçĕ хута йахăнах ÿснĕ.

Совет Союзĕн бÿджечĕ капиталисăмлă государствăсен бÿджечĕсенчен пачах уйрăм тăрать. Капиталисăмлă государствăсем расхутсен пысăк пайне кирлĕ мар çĕре йараççĕ пулсан, Совет Союзĕн 1938 çулти бÿджечĕ, малтанхи çулсенчи пекех, укçа-тенкĕн чи пысăк пайне халăх хуçалăхĕ, културă валли тата ĕççыннисен материаллă пурнăçне малала лайăхлатса пынă çĕре расхутлать.

### 1938 çулти бÿджет дохочĕсем

Бÿджетри доход пайĕнче оборотран илекен налог тата тупăшран шутласа илекен укçа пысăк вырăн йышăнса тăрать. Оборотран илекен налог 1937 çулта 75,9 мĕлйард тенкĕ пулнă пулсан, 1938 çулта 83,3 мĕлйард тенкĕ палăртнă. 1938 çулта оборотран илекен налог урлă бÿджетăн пĕтĕм доход пайне 71,4 процент тата тупăшран шутласа илекен укçа урлă 8,1 процент пырса кĕрет. ССР Союзĕн бÿджетĕнче тупăшран шутласа илекен укçа 9,6 мĕлйард тенкĕ пулать (1937 çулта 6,5 мĕлйард тенкĕ пулнă), урăхла каласан, пĕлтĕрхинчен 46,7 процент ытларах.

1938 çулта оборотран илекен налогран тата тупăшран шутласа илекен укçаран пухăнакан доходсем ÿсни вăл—промышлĕнноçăн производствă програмине таварçаварăнăшĕ ÿсниччен тата Союзăн, республикăсен тата вырăнти [illegible] государствă предприйатийĕсен тупăшĕсем пысăкланнинчен килет.

Таварăн хăйне туса кăларнă чухнехи хакне йÿнетнипе пулăнакан накоплениĕсем промышлĕнноçлă ултă халăх комиссариачĕ йенĕпе кăна 2,6 мĕлйард тенкĕ пулаççĕ. Çак цифрă вăл—1938 çулта накоплениĕсен планне тултарас ĕçре таварăн хăйне пыракан хакне йÿнетессишĕн кĕрешни çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнине çинчен калать. Таварăн хăйне пыракан хакне йÿнетмелли заданине промышлĕнноç пĕр процент тултараймасăр хăварнипех халăх хуçалăхĕ валли кайакан накоплениĕсене çĕршер мĕлйун тенкĕ çухатни пулать.

Оборотран илекен налог тата тупăшран шутласа илекен укçа йенĕпе государствă дохочĕсен планне ăнăçлăн тултарасси халăх хуçалăх планĕсене пурнăçа кĕртнипе таччăн çыхăнса тăрать.

1938 çулти малтанхи çурçул итогĕсем тăрăх çакна калас пулать: Çăмăл промышлĕнноç Халăх Комиссариачĕ, Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ тата Центросойуз хăйсен планĕсене тултараймарĕç, çапла вара государствă бÿджетне оборотран илекен налог тăрăх чылай укçа параймарĕç.

Оборотран илекен налога тата тупăшран шутласа илекен укçана тÿлессине финанс органĕсем кунсерен контрол туса тăма тивĕç, çак ответлă ĕç çине государствăла мар пăхнисене пур майсемпе те хĕстермелле.

Союзăн тата республикăсен 1938 çулти бÿджечĕсене халăхран илекен налогсенчен 3,1 мĕлйард тенкĕ укçа пухма палăртнă, вырăнти бÿджетсемпе пĕрле вăл 5.010 мĕлйун тенкĕ пулать.

Финанс ĕçĕн çак участки çине ытларах çаврăнса пăхас пулать, мĕншĕн тесен налогсем мĕлйуншар ĕççыннисен интересĕсене пырса тивеççĕ. Финанс работникĕсен налога шутласа тухса халăха пĕлтермеле, совет саккунĕсене çирĕп пăхăнса тăмала тата пирĕн партипе совет влаçĕн финанс политикине пĕр пăркалаймасăр пурнăçа кĕртсе пымала.

Финанс органĕсем йапăх ĕçленине пула 1938 çулăн малтанхи çурçулĕнче оборотран илекен налога тата тупăшран шутласа илекен укçана пухас плана çителĕксĕр тултарнă. Ун çинчен çак факт та ĕнентерсе парать: йалхуçалăх налогĕн недоимки 1938 çулти йÿлĕн 1-мĕш тĕлне 68,9 мĕлйун тенкĕ шутланать. Йалта кулаксбор укçине пухасси те çавăн пекех çителĕксĕр пырать. Кăçалхи йÿлĕн 1-мĕш тĕлне кулаксбор тăрăх недоимкă 142,1 мĕлйун тенкĕ шутланса тăрать. Çак вăл йал халăхĕнчен налогсем пухас тĕлĕшпе финанс органĕсем çителĕксĕр ĕçлесе пынине тата сăтăрлăх йулашкисене пĕтерес йенĕпе йапăх ĕçленине ĕнентерсе парать.

Саккунпа çирĕплетсе панă налогсене вăхăтра тÿлесси—государствă умĕнчи обйазаннăçсенчен пĕри пулса тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ йединоличниксем тÿлеме тивĕçлĕ налогсене тÿлемесĕр тăнă фактсем çине финанс органĕсем тимсĕр пăхнипе саккуна хирĕçле ĕç тăваççĕ. Йединоличниксен, налог тÿлекен ытти çынсем пекех, государствăпа пĕтĕмĕшпех шутласса татăлма пур майсем те пур.

Финанс органĕсен йединоличниксем тата налог тÿлекенсен ытти категорисем йенчен йалти налогсемпе тÿлевсене йăлтах тÿлесе татмала тăвас пулать.

Йулашки çулсенче стахановла йухăма пула, колхоз стройĕ çĕнтернĕ тата çĕршыври йышлă халăх массисен материаллă пурнăçĕ хăвăрт лайăхланса пынă май, ĕççыннисен перекетлĕхĕсем уйрăмах ÿсреç. Халăх дохочĕ татти-сыпписĕр ÿссе пынă никĕс çинче халăх хăйĕн укçи-тенкине перекет кассисене хывасси çулран çулах нумайланса тата государствă займĕсене çыранасси ÿссе пырать.

Пирĕн çĕршывра государствă займĕсем тахçанах ĕнтĕ финанс системинче чылай пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Советсен çĕршывĕнчи займсем—чăннипех халăх займĕсем. Вăл займсене пĕтĕм халăх пĕлсе тăрать тата вĕсене йышлă ĕççыннисем çыранса илеççĕ. Совет займĕсене илекенсен хисепĕ çулран çулах ÿссе пырать, халĕхи вăхăтра займ тытакансен хисепĕ 50 мĕлйун çынран та иртет.

Сталинла икĕ пилĕкçуллăхсем хушшинче кăна пирĕн çĕршыври ĕççыннисем займсем урлă государствăна 25 мĕлйард тенкĕ йахăн укçа пачĕç.

Совет займĕсем ĕççыннисене пысăк доход параççĕ. Пĕрремĕш пилĕкçуллăх хушшинче çеç халăх государствă займĕсенчен 582,2 мĕлйун тенкĕ, иккĕмĕш пилĕкçуллăх хушшинче—2.666,6 мĕлйун тенкĕ доход илчĕ.

ССР Союзĕнче займсемшĕн халăхран пуçтарнă налогсем шучĕпе тÿлемеççĕ, социалисăмлă предприйатисемпе организацисен накоплениĕсем шучĕпе тÿлеççĕ, вăл накоплениĕсене ÿстерсе пыма государствă займĕсем пулăшаççĕ.

1938 çулти государствă бюджечĕн пройектĕнче—ССР Союз Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕнче çирĕплетме тăратнă пройектĕнче—халăх хушшинче саракан государствă займĕсенчен 5 670 мĕлйун тенкĕ доход илме палăртнă, вăл шутран халăх хушшинче çырăнтарса вырнаçтаракан займсенчен 5 370 мĕлйун тенкĕ тата Государствăн 1938 çулти шалти выигрышлă займĕнчен—300 мĕлйун тенкĕ. Кунсăр пуçне, кооперации, страховани тата перекет организацисем илнĕ займсенчен пухăнна 2 060 мĕлйун тенкĕ дохода пĕтĕм государствă бюджетне кĕртнĕ. Çапла вара, займсенчен пĕтĕмпе 7 730 мĕлйун тенкĕ илме палăртнă.

1938 çулти йÿлĕн 1-мĕшĕнче кăларнă Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕррĕмĕш çулхи кăларăм) Займа пирĕн çĕршыври ĕççыннисем калама çук пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Займа 5 мĕлйард тенкĕлĕх кăларнă, правительствă решенине пичетлесе кăларсан 10 кунтан займа 5.350 мĕлйун тенкĕлĕх çырăнчĕç, пайанхи кун тĕлне 5,9 мĕлйард тенке йахăнах çырăннă, вăл шутран йалта 897 мĕлйун тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Сталинла икĕ пилĕкçуллăхсем хушшинче халăх хăйĕн укçи-тенкине перекет кассисене хывасси 20 хут ытла ÿсрĕ, тата йулашки 5 çул хушшинче кăна перекет кассисене хывнă укçа шучĕ 5 хута йахăнах ÿсрĕ, перекет кассисене хывнă укçа хисепĕ халĕхи вăхăтра 5,7 мĕлйард тенкĕрен те иртсе кайать.

1937 çулта перекет кассисене 976 мĕлйун тенкĕ укçа хывнă пулсан, 1938 çулта перекет кассисене 1.300 мĕлйун тенкĕ вклад йавăçтарма палăртнă. Перекет кассисене вкладсем йавăçтарас план кăçалхи малтанхи çурçул хушшинче ăнăçлăн тулса пырать.

### 1938 çулти бÿджет расхучĕсем

Союзăн тата республикăсен 1938 çулти бÿджечĕсенчен пĕтĕмпе 115.301 мĕлйун тенкĕ расхутлама палăртнă, 1937 çулта 93.921 мĕлйун тенкĕ расхутланă пулнă, урăхла каласан, расхутсем 21 380 мĕлйун тенкĕ ÿсеççĕ, йе вăл 1937 çулпа танлаштарсан 22,8 процент ÿсни пулать. Бÿджет укçи-тенкине расхутласси 1938 çул валли йышăннă халăх хуçалăхне ÿстермели план тăрăх пулса пырать. Бÿджет укçи-тенкисем обшчĕствăлă пуйанлăха ÿстернĕ çĕре, ĕççыннисен материаллă тата културă пурнăçне лайăхлатнă çĕре, ССР Союзĕ никама пăхăнмасăр пурăнассине тĕреклетнĕ тата унăн оборонă пултарулăхне вăйлатнă çĕре каяççĕ.

ССР Союзĕн 1938 çулти государствă бÿджетĕнчен тата республикăсен бÿджечĕсенчен халăх хуçалăхĕ валли 47.212 мĕлйун тенкĕ расхутлама палăртнă, йе вăл пĕтĕм расхутсенчен 40,9 процент пулать.

Вăл расхутсем çакăн пек пайланаççĕ:

(Мĕлйун тенкĕпе)

| | 1937 çул | 1938 çул | 1937 çулпа танлаштарсан 1938 çулта мĕн чухлĕ ÿсет | |
|---|---|---|---|---|
| | | | Мĕлйун тенкĕпе | Процентпа |
| Промышлĕнноç | 15.300 | 19.821 | 4.521 | 29,5 |
| Йалхуçалăхĕ | 8.833 | 10.997 | 2.164 | 24,5 |
| Транспортпа çыхăну | 7.355 | 6.763 | 592 | 8,0 |
| Государствă сутти-илĕвĕ тата хатĕрлев организацийĕсем | 2.753 | 2.808 | 53 | 1,9 |
| Хуçалăхăн ытти отраслĕсем | 5.098 | 6.926 | 1.738 | 34,1 |
| Халăх хуçалăхĕ тăрăх пĕтĕмпе | 39.339 | 47.312 | 7.870 | 20,0 |

Хуçалăха укçа-тенкĕ парассинче капиталлă строительствă тата халăх хуçалăхĕн отраслĕсен оборотри укçи-тенки çумне хушса парассен тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Капиталлă строительствă калăпăшĕ пирĕн çĕршывра çулран çулах пит пысăккăн ÿссе пырать. 1938 çулта халăх хуçалăхĕнче капиталлă ĕçсен пысăкăшĕ 38,3 мĕлйард тенкĕ пулмалла палăртнă, вăл ĕнтĕ пĕлтĕрхипе танлаштарсан ÿсĕм 30 процент пулнине пĕлтерет. Строительствă ĕçĕсене тума лараканă хака йÿнетмелине шута илсен, строительствăна 35,8 мĕлйард тенкĕ памала пулать.

Капиталлă ĕçсене тума государствă бюджетĕнчен 24,88 мĕлйард тенкĕ памала йе вăл капитал хывмалли пĕтĕм програмăран 69,6 процент пулать.

Кăçалхи строительствă ĕçĕсен планĕн тĕп уйрăмлăхĕ укçа-тенкĕ тата материалсене, чи малтан, кăçалах ĕçе кĕмелли стройкăсене пани пулать,—çавă ĕнтĕ 1938 çулта тĕп фондсене иртнĕ çулхинчен пĕрре те çурă хут нумайрах ĕçе кĕртме май памала.

1938 çулта Правительствă строительствă работникĕсем умне пысăк задачă лартнă—строительствă лараканă хака сметăри хаксенчен 7 процентран сахал мар чакармала тата ĕç тухăçлăхне 17 процент ÿстермелле. Çак заданине пурнăçа кĕртмели условисем пурте пур.

Пройектсем-сметăсем тăвас ĕçре те болшевикла йĕркеçĕр кĕрес пулать. Кăçал ССР Союзĕн правительстви промышлĕнноç строительствинче пройект-сметă ĕçĕсене лайăхлатасси çинчен решени йышăннă, вăл—пройект—сметă ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех, чи малтан пройект-сметă документĕсен, уйрăмах илсен, технически пройектăн содержанине простойлатнипе, лайăхлатса йамаллискер.

Пройект-сметă ĕçĕнче йĕркене кÿрессипе пĕрлех ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ промышлĕнноç строительствине укçа-тенкĕ парассине йĕркене кĕртмелли ĕçсене палăртса панă.

Капиталлă строительствăна укçа-тенкĕ памалли правилăсем, вĕсене ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ нумай пулмасть çирĕплетнĕ, строительствăна укçа-тенкĕ памалли пĕтĕм йĕркене тĕпренех лайăхлатса йараççĕ.

(Малалли 3-мĕш страницăра).

*) Кĕскетнĕ стенограмма.

*ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ*

# Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕн 1938 çулти пĕтĕм государствă бюджечĕ çинчен

## ССР Союз Финанс Халăх Комиссарĕ А. Г. ЗВЕРЕВ йулташ доклачĕ

*(Й У Л А Ш К И)*

Спецбанксемпе финанс оргăнĕсен вырăнсенче стройкăсен кашни кулленхи ĕçĕсене çывăххăн пĕлсе тăмала, шалти ресурссене мĕнле мобилизацилеине йăлан сăнамала, капитальнăй строительствăна панă укçа-тенкĕпе тĕрĕс усă курнине çирĕп контроль тумала.

1938 çулта хуçалăх оргăнĕсен оборотри укçи-тенкисене 8,9 мĕлйард тенкĕлĕх ÿстерме, вăл шутран бюджетран 5,4 мĕлйард тенкĕ пама палăртнă.

Хуçалăх оргăнĕсен пысăк задачисенчен пĕри—оборотри укçа-тенкĕпе тĕрĕс усă курасси пулат.

### Социаллă-культурăлла расхутсене валли укçа-тенкĕ парасси

Сталинла икĕ пилĕкçуллăхсем хушшинче халăха çутта кăларас тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçсене ССР Союзĕн государствă бюджетĕнчен тата вырăнти бюджетсенчен 84 мĕлйард тенкĕ йахăн расхутланă.

Государствăн 1938 çулхи планĕпе культурă строительствине чылай ÿстерме палăртнă. Кăçалхи çул социаллă-культурăлла ĕçсем валли государствă бюджечĕ тата вырăнти бюджетсем тăрăх 31,4 мĕлйард тенкĕ расхутламала, вăл ĕнтĕ 1937 çулхинчен 5,9 мĕлйард тенкĕ йе 23,3 процент нумайрах пулат. Йулашки 10 çул хушшинче государствă бюджечĕпе вырăнти бюджетсем тăрăх социаллă-культурăлла расхутсене валли укçа-тенкĕ расхутлани 20 хут ÿснĕ. Унсăр пуçне, культурăлла ĕçсене валли профсоюз, коопераци тата обшчĕствăлла организацисем нумай расхутлаççĕ. 1938 çулта культурă валли бюджетран тата бюджетран мар укçа тенкĕ расхутлани 42 мĕлйард тенкĕ ытла пулат.

Социаллă-культурăлла строительствăн финанс планĕнче халăха çутта кăларас ĕçе кайакан расхутсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Вĕсем 1938 çулта 20,1 мĕлйард тенкĕ пулмала тунă,—1937 çулта 16,3 мĕлйард тенкĕ пулнă.

Кăçалхи çул ĕнтĕ пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ 33 мĕлйун çынна çитрĕ. Аслă образовани йенĕпе те пирĕн çĕршыв паллă çитĕнÿсем турĕ. Çакна каласан та çителĕклĕ пулат,—пирĕн çĕршыври аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ Германири, Италири, Англири, Францири тата Йапонири шкулсенче вĕренекенсене пурне пĕрле илсе шутланă хисепрен те пайтах нумайрах.

Совет çĕршывĕнчи аслă шкулсенче вĕренекенсене пурне те пекех стипенди парса тăраççĕ.

Союзлă республикăсен бюджечĕсем тăрăх пысăк укçа-тенкĕ—3.775 мĕлйун тенкĕ—кадрсене, пуринчен ытла педагогикă тата медицинă кадрĕсене хатĕрлеме кайат.

Шкул çулне çитмен ачасене воспитани пама кайакан расхутсем те чылай ÿсеççĕ.

Государствă халăх сывлăхне сыхлама пит пысăк укçа-тенкĕ парат. 1937 çулта государствă бюджечĕ тăрăх тата вырăнти бюджетсем тăрăх халăх сывлăхне сыхлама 6.827 мĕлйун тенкĕ расхутланă. 1938 çулта халăх сывлăхне сыхлама 8.076 мĕлйун тенкĕ расхутлама палăртнă, вăл ĕнтĕ иртнĕ çулхинчен 1.249 мĕлйун тенкĕ йе 18,3 процент нумайрах пулат.

Ача амăшĕсене тата ачасене сыхлас ĕçе валли 1938 çулта 1.382 мĕлйун тенкĕ расхутлама шутласа хунă. Нумай ачаллă амăшĕсене пособи пама кăçалхи çул 900 мĕлйун тенкĕ палăртса хунă.

### Союзлă республикăсен государствă бюджечĕсемпе вырăнти бюджетсем

Ленинла-сталинла наци политикине пурăçа кĕртсе пынă викĕсинче Социалисăмлă Советлă Республикăсене хăвăрт вăйлатмала тăвакан чи кирлĕ фактăрсем хушшинче пĕтĕм государствă бюджечĕ пысăк вырăн йышăнса тăрат. Союзăн 1938 çулти бюджетĕнчен республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсене 17.955,6 мĕлйун тенкĕ параççĕ.

Союзлă республикăсен 1938 çулти государствă тата вырăнти бюджечĕсене çакăн пек балансла итогсемпе палăртнă:

(Мĕлйун тенкĕпе)

| | 1937 çул отчот | 1938 çул бюджет | Ӳсĕм процентпа |
|---|---|---|---|
| РСФСР | 18.862 | 21.407 | 13,5 |
| Украина ССР | 5.191 | 5.977 | 15,1 |
| Белорус ССР | 1.009 | 1.167 | 15,7 |
| Азербайджан ССР | 762 | 916 | 20,2 |
| Грузин ССР | 917 | 1.065 | 16,1 |
| Армян ССР | 338 | 388 | 14,8 |
| Туркмен ССР | 395 | 441 | 11,4 |
| Узбек ССР | 1.140 | 1.315 | 15,3 |
| Таджик ССР | 363 | 443 | 22,0 |
| Казах ССР | 1.153 | 1.284 | 11,1 |
| Киргиз ССР | 266 | 347 | 30,5 |
| пĕтĕмпе | 30.396 | 34.747 | 14,3 |

Çак цифăрсем вĕсем—союзлă республикăсемпе вырăнти советсем шăлах 34,7 мĕлйард тенкĕ укçа тытнине кăтартса параççĕ.

Ленинла-сталинла наци политики Совет Союзĕнчи халăхсене нумай нацилĕ тăванла çемйене пĕрлештерчĕ тата пирĕн нацилĕ окраинăсенчен вăйлă промышленнăçлĕ тата йалхуçалăхлă чечекленекен республикăсем туса хучĕ.

Союзлă республикăсен бюджечĕсенчен халăх хуçалăхне укçа парса тăмали расхутсене 6.852 мĕлйун тенкĕ йышăннă. 1937 çулпа танаштарсан вăл расхутсем 11,2 процент ÿсеççĕ.

### Социаллă-культурăлла ĕçсем валли кайакан расхутсем

Республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсенчен социаллă-культурăлла ĕçсем валли кайакан расхутсем 1938 çулта, 1937 çулпа танлаштарсан, 20,3 процент ÿсеççĕ.

Республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсенчен халăха çутта кăларас ĕç валли 1937 çулта 12.804 мĕлйун тенкĕ расхутланă пулсан, вăл расхутсем 1938 çулта 15.059 мĕлйун таран ÿсеççĕ, йе вăл 17,6 процент пулат, социаллă обеспечени валли кайакан расхутсем 1.251 мĕлйун тенкĕрен 2.049 мĕлйун тенкĕ таран, йе 63,8 процент ÿсеççĕ.

Союзлă республикăсен государствă тата вырăнти бюджечĕсенчен (сводниă бюджет) 1938 çулта сывлăха сыхлас ĕç валли 6.932 мĕлйун тенкĕ расхутлама палăртнă, вăл 1937 çулпа танлаштарсан 17,5 проц. ÿсни пулат.

Çакна та кăтартса хăварас пулат: пур республикăсенче те мар бюджет дисциплинине çирĕп пăхăнса пыраççĕ.

1937 çулта управлени расхучĕсене планланă чухне Узбек ССР тата Азербайджан ССР Финанс Халăх Комиссариачĕсем управлени расхучĕсене чылай ÿстерсе йанă. Штатсемпе окладсене хăйсен ирĕкĕпех хăпартса йанă фактсем пур. Çапла, Азербайджан СС Республикĕнче работниксене уйрăм оклад парса тăрасси сарăлса кайнă, çак вăл расхутсене чылай ытлашши кăларасси патне илсе пынă.

Союзлă республикăсен тĕп строительствинче бюджет дисциплинине пысăккăн пăсни хăйĕн çине çавăрăнтарса пăхтарат.

Çак фактсем пурте ĕнте финанс оргăнĕсен ревизипе контроль ĕçне вăйлатма хушаççĕ.

### Совет Союзĕн оборонине укçа-тенкĕ парасси

Çĕр чăмăрĕ çинчи халăхсем умне çĕнĕ тĕнче вăрçин хăрушлăхĕ тухса тăчĕ, вăл хăрушлăх нихçанхи пек те мар çывăх тата чăннипех пулма пултарат, çав вăрçăна фашисла агрессăрсем хатĕрлеççĕ. Çакна пула ĕнтĕ Совет правительстви пирĕн çĕршывăн оборонине татти-сыпписĕр тĕреклетсе пырат. Вăрçă кĕтмен çĕртенех, кирек хăш вăхăтра та сиксе тухма пултарат, мĕншĕн тесен, Сталин йулташ каланă пек, „хальхи вăхăтра малтанах пĕлтерсе вăрçă пуçламаççĕ. Вĕсем простă пуçланаççĕ".

Йапони военщинин йулашки кунсенче Хасан кÿлли районĕнче чылай хутчен провокаци туса совет территорийĕ çине тапăнса кĕчĕ. Йапони регулярлă чаçĕсем совет территорийĕ çине тапăнса кĕрсе кайни вăл—Йапони военщинин Йапоние ССР Союзне хирĕç вăрçа туртса кĕме хатланнине пĕлтерет. Совет правительстви, фашисла государствăсен йут çĕршывсене туртса илес политикине тăрă шыв çине кăларса, мирлĕ политикăна татăклăн та вĕçне çитиех пурнăçа кĕртсе пырат.

Советăн мирлĕ политики совет çĕршывне хÿтлет çеç мар, тата мĕн пур çĕршывсенчи ĕçсыннисене хÿтлет, етемлĕх культурине фашисла варварствăран хÿтлет. Советсен çĕршывĕ, хăйĕн шалти хăвачĕ вăйлăскер, сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче калама çук тĕреклениĕскер, мирлĕ пурнăçа хÿтлекен тĕп çĕршыв пулса тăрат.

„Пирĕн хамăр çĕршыв, тулăшĕнчи политикă уççăнах паллă,—тесе каланă Сталин йулташ пирĕн партин XVII-мĕш съесĕнче тунă отчотлă докладра.—Вăл—мирлĕ пурнăçа сыхласа тăрас тата пур çĕршывсемпе те суту-илÿ ĕçне вăйлатса йарас политикă. ССР Союзĕ кама та пулин хăратма тата—пуринчен ытла—кам çине те пулин тапăнма шутламаст. Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансем çапни çине çапнипех ответ пама хатĕр тăратпăр". (Нумайччен, тăвăллăн алă çупаççĕ).

Совет Союзĕ хăватлă, ăна никам та çĕнме пултараймаст. Унăн вăйĕ—пирĕн нумай нацилĕ государствăри пĕтĕм халăхсем пĕр-пĕринпе уйăрăлми туслашса пурăннинче, массăсем социалисăм ĕçне, большевикла партине тата ĕç етемлĕхĕн аслă çулпуçне тата учителне—Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратса тăвинче (Пурте ура çине тăраççĕ. „Аслă Сталина—урра!" тесе кăшкăраççĕ. Тăвăллăн алă çупаççĕ). хăватлă социалисăмлă економикăра тата Совет Союзĕн оборонă пултарулăхне татти-сыпписĕр тĕреклетсе пынинче.

Совет Союзĕн хăватне татах та ытларах тĕреклетес тесе, ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Çессинче çирĕплетме тăратнă 1938 çулти бюджета Оборонă Халăх Комиссариачĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн смети тăрăх 27 мĕлйард тенкĕ укçа пама палăртнă. (Тăвăллăн алă çупаççĕ)

Çак укçасем пирĕн тăван çĕршывăн оборонă пултарулăхне тата ытларах тĕреклетĕç, кам совет пăшалĕн вăйне тутанса пăхма хатланат—ăна хуйхă пулĕ! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Совет Союзĕн никам тĕкĕнме пултарайми чиккисене хÿтлеме пĕтĕм совет халăхĕ сиксе тăрĕ. Асса кайнă империалиссен, вăрçă чĕртсе йаракансен провокацийĕсене хирĕç пирĕн çĕршыв аркатса пăрахмалах çапма хатĕр тăрат. Кирлех пулсан, коммунисла партипе йуратнă çулпуçĕ—Сталин йулташ тавра пĕтĕçнĕ пĕтĕм совет халăхĕ социалисăмлă тăван çĕршывăн чиккисене çтена пек тăрса тухса, хăйĕн ирĕклĕхне тата никама пăхăнмасăр пурăнассине сыхласа хăварма пĕлĕ. (Пурте ура çине тăраççĕ. „Сывă пултăр Сталин йулташ. Урра!" тесе кăшкăраççĕ. Тăвăллăн алă çупаççĕ).

---

Призыв умĕн

## Ыра сунса кĕтетпĕр

Çĕнтăбĕрĕн 1-мĕшĕнче призыв пуçланат. Епĕр, К. Е. Ворошилов йачĕпе тăракан чаçри красноармеецсем, командирсем тата политработниксем, хамăрăн шăллăмсене 1917—1918 çулсенче çуралнă призывниксене призыва пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илсе, тăван çĕршыва сыхлама килме чĕнетпĕр. Кашни гражданин социалисăмлă тăван çĕршыва сыхлама тивĕçлĕ. Хĕрлĕ Çарта пулассин вăл чаплăран та чаплă чыс. Çавăнпа та ĕçхалăхĕн ывăлĕсем çав чаплă та хисеплĕ йата илме тивĕçнĕ пулмала.

Пирĕн чечекленекен социалисăмлă тăван çĕршыва капиталисăмлă государствăсем хупăрласа тăраççĕ. Капиталисăмлă государствăсем çĕнĕ вăрçă чĕртсе йарасшăн. Италипе Германи фашисăмĕ Испание лапчăтса лартасшăн, Йапони Китайа тытса илесшĕн. Йапони самурайĕсем пирĕн чиккĕсене пăсса пирĕн территори çине тапăна-тапăна кĕреççĕ. Анчах пирĕн Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ Йалавлă фронт Йапони бандичĕсене тивĕçлĕ отпор парат.

Вăрçа кайнă Германи фашисăмĕ Австрие çавăрса илнĕ, Чехословакине лапчăтасшăн, унтан тата Совет Союзĕ çине тапăнма вăрçа хатĕрленет. „Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансем çапни çине çапнипех ответ пама хатĕр тăратпăр" (Сталин).

Пирĕн çине тăшман вăрçăла килет пулсан, епĕр, çамрăк командирсем, хамăрăн бойецсене фронта йертсе кайса, хамăр пуççене шеллемесĕр, йулашки йун тумламĕ йулмиччен тăшмансемпе çапăçма хатĕр тăратпăр.

Пире йут çĕр кирлĕ мар, хамăрăнне те никама та пĕр пĕрчук та памастпăр.

Кĕçĕн командир Т. ПАВЛОВ.

### Кашнийех Хĕрлĕ Çара кайасшăн

Кармалти (Тăвай р.) „Коминтерн" колхозри 1917—1918 çулта çуралнă çамрăксем призыва пысăк хавасланса кĕтеççĕ. Призыва кĕрекен Николай Макаров йулташ çапла калат:

— Епĕ хамăрăн чечекленекен тăван çĕршыва сыхлама кайма хатĕр. Хĕрлĕ Çар ретне тăрасси вăл—манăн чи таса та тивĕçлĕ, хисепле ĕç.

Йалсоветри ытти çамрăксем те пысăк хавасланса тулнă. Вĕсем кашнийех Хĕрлĕ Çара кайасшăн. Вĕсем Ленин—Сталин кĕнекисене вуласа хăйсен пĕлÿлĕхне ÿстереççĕ. Йалсоветне мала кăларас тесе, унăн ĕçне активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ.

Л. Шашков.

---

# Америкăри демократилĕ фронт

Економикăлă кризис тарăнланса пыни тата тĕнче вăрçине пуçласа йама хатланакан фашисла çĕршывсен агрессийĕ вăйланса пыни Америкăри обшчĕствăлла вăйсем пайланса тăрассине палăрмалах вăйлатат. Хальхи вăхăтра кунти обшчĕствăлла вăйсем икĕ пайа—прогрессивлă-демократилĕ тата реакцилĕ-фашисла пайсене уйăрăлаççĕ.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче политикăлла ытусемпе йулашки вăхăтчченех икĕ парти—республикăлла тата демократилĕ партисем калаçнă, вĕсем пĕр-пĕрин хушшинче пĕрмайах влаçшăн çапăçнă. Хальне ĕнтĕ демократилĕ парти хăй икĕ пайа уйăрăлнă—сылтăмиисем, республикăлла партин реакционерĕсемпе килĕшсе ĕçлекенскерсем тата прогрессивлă-сулахайăнсем, вĕсене фашисăма хирĕçле курс тытса пыракан президент Рузвельт йертсе пырат.

Америкăри реакцилĕ буржуази Рузвельт çине вăйлăн тапăнса пырат. Çав тапăнупа реакцилĕ буржуази Рузвельта прогрессивлă ĕçсем туса пыма чарасшăн, мĕншĕн тесен вăл ĕçсем шултра капиталăн интересĕсене тĕкĕнеççĕ. Америкăн шалти политикинче—шултра промышленниксемпе банкирсем кризисăн пур йăвăрлăхĕсене те ĕçсыннисем çине тийеме тăрăшаççĕ. Тулашри политикăра вĕсем изоляци политикине тытса пыртарасшăн, ку ĕнтĕ нейтралитет çинчен кăларнă саккунрапах лайăх курăнат. Практикăра вара ку „нейтралитет" агрессăрсене тÿррĕмĕнех пулăшни пулса тăрат. Çакă вăл Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен правительстви республикăлла Испанин тĕлĕшĕпе йышăннă позицирен уйрăмăнах палăрат. Испани правительстви Америкăран хĕçпăшал сутăн илме пултараймаст, мĕншĕн тесен нейтралитет çинчен кăларнă саккун тăрăх Испанире икĕ йен валли те (республикăлла валли те, фашисла влăкенçĕсем валли те) хĕçпăшал сутма чарнă.

Çапла ĕнтĕ, Америкăри реакционерсем шалти политикă ыйтăвĕсемпе те, çапла тулти политикă ыйтăвĕсемпе те фашисăмпа пĕрлешсе тăраççĕ. Йулашки вăхăтра Германин Америкăри шпионла центрне тăрă шыв çине кăларнă, вăл „Америкă-Германи союзĕ" йатлă фашисла организаци Америкăри реакцилĕ фашисла ушкăнсемпе таччăн çыхăнса ĕçленине кăтартса пачĕ.

Америкăн шултра буржуазийĕ татăклăнах фашисăм йенне çавăрăннă, çакă вăл прогрессивлă тата демократилĕ елементсене буржуази политикăлла организацийĕсенчен пăрса йачĕ тата çавăнпа пĕрлех прогрессивлă тата демократилĕ нумай хисеплĕ сапаланчăк организацисене пĕрлештерме пулăшрĕ.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи коммунисла партин 1938 çулхи майă уйăхĕнче пулса иртнĕ Х-мĕш съесĕ çĕршыври прогрессивлă пур вăйсене те пĕрлĕхлĕ демократилĕ фронта пĕрлештересси никĕсĕ пулса тăракан программă-минимум йышăнчĕ. Вăл программă тăрăх ĕçсыннисен материаллă пурнăçне лайăхлатма тата монополиссен влаçне чĕкклетме, демократилĕ правасене, уйрăмăнах негрсен прависене, хÿтлеме тата вăл правасене сарса пыма, çапла тата мир ĕçне пулăшас тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕçсем туса ирттерме палăртнă. Программă фашисла организацисене саратса йама, Германи, Йапони тата Итали шпионажне тата Америкăри фашисла пропагандăна хирĕç кĕрешессине вăйлатма, агрессăрсене бойкот тăвассине пурнăçлама, Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи нейтралитет çинчен кăларнă саккуна пăрахăçлама, республикăлла Испание хĕçпăшал сутма тата Германие, Италие, Йапоние хĕçпăшал сутассине чарма хушат.

Америкăри анлă массăсен демократилĕ фронтшăн кĕрешес йухăмĕ кунран-кун ытларах сарăлса пырат. Ку вăл практикăра чылай политикăлла кампанисен результачĕсенче палăрчĕ ĕнтĕ. Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен конгресне (парламентне) суйлассишĕн пуçланса кайнă кампани анлă массăсем пĕрлĕхлĕ пулса кĕрешес йенне турттăнни çинчен уççăнах калакан пример пулса тăрат. Конгрес суйлавĕ 1938 çулхи ноябер уйăхĕнче пулса иртмелле. Халь чылай штатсенче конгреса кандидатсем тăратас ĕç пырат. Кандидатсенчен Рузвельт майлисем пысăк йăлçупа усă курни палăрат. Клорида штатĕнче реакционер Уилкокс кандидатурине сирсе йанă, прогрессивлă кандидат, Рузвельт политикине тытса пыракан Пеппер демократ чи нумай сасă илнĕ. Миннеста штатĕнче фермерсемпе рабочисен партийĕ тăратнă кандидат чи нумай сасă илнĕ. Пенсильванийă штатĕнче те Рузвельт майлă кандидат çĕнтернĕ. Кандидатсем тăратассин çак малтанхи результачĕсемех ĕнтĕ демократилĕ фронт шухăшне анлă массăсем кăмăлланнине кăтартса парат.

1937 çул вĕçĕнче Нью-Йоркра тата ытти чылай пысăк хуласенчи муниципаллă суйлавсем те демократишĕн пысăк çĕнтерÿсем пачĕç. Нью-Йорк штатĕнче Америкăри рабочи партин кандидачĕсем 428 пин сасă илнĕ, вăл пĕтĕм сасăсен хисепĕнчен 24 процентĕ пулат. Нью-Йоркри муниципаллă советра вăл партин улттă представителне суйланă. Ытти чылай штатсен муниципалитечĕсене те (Пенсильванийă, Огайо т. ыт. те) çапла йе рабочи организацисен кандидачĕсем йе прогрессивлă демократсем суйланнă.

Кăçал майăн 1-мĕш кунне пысăк ситĕвÿпе уявласа ирттернĕ. Нью-Йоркра май уявне ирттерме хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçленĕ пĕрлешÿлĕ комитетра 552 организаци пулнă, вĕсенче пурĕ 700 пин член пĕрлешсе тăрат. Майăн 1-мĕшĕнчи демонстрацине Нью Йоркра пурĕ 300 пин çын хутшăннă.

Хальхи вăхăтра Америкăра чейеле изоляци политикине тепĕр хут пăхса тухассишĕн кĕрешекенсен йухăмĕ вăйланса пырат. Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи ĕçсыннисем, хăйсем никама пăхăнса тăрас марришĕн кĕрешекен Испанипе Китай халăхĕсемпе пĕр шухăшла, вĕсем нейтралитет çинчен кăларнă саккуна тепĕр хут пăхса тухма ытларан та ытларах çине тăрса ыйтаççĕ. Тĕрлĕ профсоюзсен тата ытти организацисен членĕсем 7 мĕлйун çын ытла республикăлла Испание хĕçпăшал сутма чарнине пăрахăçа кăларассишĕн тухса калаçнă та ĕнтĕ.

Çак фактсем пурте Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче пĕрлĕхлĕ демократилĕ фронт тумали майсем çителĕклех пурри çинчен калаççĕ.

Демократилĕ тата прогрессивлă елементсем пĕрлешсе ĕçлессине хирĕç кĕрешекен реакцилĕ-фашисла вăйсен шутĕнче тата фашисла агентурă ĕçлет, вăл агентурăра троцкиссем, левстонистсем тата профсоюзсен „верхушкинчи" реакцилĕ елементсем тăраççĕ. Фашисăмăн çав агенчĕсем Америкăри рабочисен йухăмĕн ăшĕнче пĕрлĕхлĕ фронт тактикине пур майсемпе те чăрмантарма тăрăшаççĕ. Америкăри троцкиссем реакцилĕ изоляци политикине хÿтлесе тăраççĕ. Америкăри ĕç федерацин реакцилĕ руководителĕсем пĕтĕм профсоюз йухăмне пĕрлештерессине чăрмантаракан политикă тытса пыраççĕ. Рабочисене производствăлла принцип тăрăх профсоюза пĕрлештерес тĕлĕпе ертнĕ профсоюзсен прогрессивлă Комитетне хирĕç вĕсем вирлĕн кĕрешеççĕ. Америкăри ĕç федерацин председателĕ Грин партире тăман рабочисен лигине хÿтлекенсене пурне те профсоюзри кăларма йатарласа кăларту панă. (Партире тăман рабочисен лиги—рабочисен 1936 çулта тунă прогрессивлă политикăлла пысăк организацийĕ).

Рабочи клас хушшинче ытĕр фашисла агентсене тăрă шыв çине кăларасси тата вĕсене хирĕç кĕрешесси—фашисăма хирĕç пĕрлĕхлĕ пулса ĕçлессишĕн кĕрешекен рабочи класăн чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрат.

Пĕрлешÿлĕ Штатсенче пĕрлĕхлĕ демократилĕ фронт тăвас çине хирĕç кĕрешессинче фашисăм агенчĕсем пур тĕрлĕ чейелĕхсемпе те усă кураççĕ. Нумайах пулмаст Висконсин штатĕнче „прогрессивлă" йатлă çĕнĕ парти туса хунă. Унăн организатăрĕ çав штатри губернатăр Ла Фоллет пулнă. Ла Фоллет хăйĕн программăлла сăмахĕнче Рузвельт çине тата вăл туса ирттерекен ĕçсем çине тапăннă. Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи коммунисла парти Тĕпкомĕ йатарласа кăларнă заявленийĕнче çав „прогрессивлă" çĕнĕ партийе тăрă шыв çине кăларнă, ăна тăвакансене пĕрлĕхлĕ демократилĕ фронт тăвассишĕн пыракан йухăмра раскол тума хăтланакан фашисла ирсĕрсем тесе хакланă.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи демократилĕ фронтăн мĕнле вăйсем пур-ха? Демократилĕ фронтăн чунĕ тата ăна малала илсе пыракан вăйĕ—Америкăри компарти пулса тăрат, унăн ретĕнче комсомолпа пĕрле 95 пин çын шутланат. Коммунисла партин авторитечĕ тата влиянийĕ кунран-кунах ÿссе пырат. Производствăлла профсоюзсен комитечĕ демократилĕ фронтăн пиншĕ шултра вăйĕ пулса тăрат. Комитет 39 профсоюза пĕрлештерсе тăрат, вĕсенче пурĕ 4 мĕлйун член. Америкăри ĕç федерацине кĕрекен профсоюзсем те нумайĕшĕ пĕрлĕхлĕ демократилĕ фронта пулăшса пыраççĕ.

Партирĕ тăман рабочисен лиги те палăрмаллăхах пысăк вăй пулса тăрат, унта Америкăри ĕç федерацине кĕрекен профсоюзсен чăгнĕсем те, производствăлла профсоюзсен Комитетне кĕрекен профсоюзсен членĕсем те пĕрлешсе тăраççĕ. Малла, хăшпĕр штатсенче вырăнти рабочисен тĕрлĕ йатлă партийĕсем пур. Нью-Йорк штатĕнче—Америкăри рабочи парти, Нью-Джерси штатĕнче—Рабочи парти, Миннесота штатĕнче—Фермерски-рабочи парти, Вашингтон штатĕнче Содружествă федерацийĕ т. ыт. те.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче çамрăксен пурнăç условине лайăхлатассишĕн пĕрлешсе кĕрешекен çамрăксен пысăк организацийĕсем пур, сăмахран Америкăри çамрăксен конгресĕ (çак йаланах ĕçлекен организаци тĕрлĕрен организацисенчи çамрăксене 2 мĕлйун çынна йахăн пĕрлештерсе тăрат). Çак конгрес çуллен çамрăксен пысăк сĕвĕсене туса ирттерет.

1935 çулта студентсен икĕ союзĕ—Америкăри студентсен лиги тата Индустрири çамрăк студентсен лиги—Америкăри студентсен союзне пĕрлешрĕç, унăн ретĕнче темиçе вуншар пин студентсем шутланаççĕ. Çак союз йертсе пынипе Америкăра çулленех апрелĕн 22-мĕшĕнче студентсен вăрçа хирĕçле демонстрацине туса ирттереççĕ.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче негрсен пĕртанлăх правишĕн кĕрешекен „йухăм" пур. Хутсем çинче пĕртанлăх прави пур пулин те, кунта негрсен прависем питĕ те пĕчĕккĕ. Вĕсене çар ретĕнче пулма та ирĕк памаççĕ. Иртнĕ çулта негрсен пĕтĕм Америкăри иккĕмĕш конгресĕ пулса иртнĕ, унта пурĕ 2 пин делегат пулнă. Вăл конгрес негр халăхне пĕртан правалăхшăн кĕрешес ĕçре пĕрлĕх-тăвас ыйтăва сÿтсе йавнă.

Пуçлăшкинче мирпе демократин Америкăри лиги 4 мĕлйун çын ытла пĕрлештерсе тăрат. Иртнĕ çулта çав лигăн съесĕнче вăрçа тата фашисăма хирĕç кĕрешмелли программăна йышăннă.

Çак организацисем пурте Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче пĕрлĕхлĕ демократилĕ фронт тумали никĕс пулса тăраççĕ.

... Горкин.

## Тырпулсене клещсенчен сыхлар

Тырпулсене клещсем йĕресрен сыхланасси, клешчсене пĕтерсе пырасси колхозсенче пысăк вырăн йышăнса тăмала. Анчах çак ĕçе чылай районсенчи колхозсем хакламаççĕ. Хăшпĕр çĕрте ампарсемпе складсене дезинфекци тусан та клешчсем йулнă. Акă, „Смычка" тата Калинин йачĕпе тăракан (Йелчĕк р.), „Ленин çулĕпе" (Патăрйел р-не) колхозсенче çĕнĕ тырăсене хумалли ампарсене дезинфекци туна. Çавах та урай хăмисем тата пĕрене хушăкĕсем хушшинче клешчсем йулнă. Çак тĕслĕхсем ĕнтĕ хăшпĕр колхозсенче дезинфекци ĕçне йачĕшĕн кăна туса ирттернине кăтартса пăраççĕ.

„Коммунист" колхозра (Йелчĕк р-не) государствăна тырă леçме кайнă чухне лашасене çитерме ихлпе пĕлтĕрхи сĕлĕне урапа çинчи тырăпа пĕрле хурса кайнă. Çул çинче селĕри клешчсем государствăна памалли тырра йерне. Çавăнпа вăл тырра йышăнман, кайала турттарса тавăрăнмала пулнă. Çакăн пек тĕслĕх Калинин йачĕпе тăракан (Йелчĕк р.) колхозра та пулнă.

Çавăнпа та ĕнтĕ тырпулсене клешчсенчен зирлĕ сыхлама тăрăшмала. Çĕнĕ тырра лайăх типĕтсе ампарсене хывас пулат. Тырă мĕн чухлĕ чĕрĕ, çавăн чухлĕ ăна клешч хавăртрах йерсе, вăйлăн хувама пултарат.

Чылай колхозсенче тырă авăртмалли армансем пур. Çав армансене те лайăх дезинфекци тăвас пулат. Çакăн пек тумасан, армансенче клешчсем вăйлăн ĕрчеме пултараççĕ. Йелчĕк районĕнчи Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозăн арманĕнче нимĕнле йĕркелĕх те çук. Çавăнпа унта клешчсем пит вăйлăн ĕрченĕ.

Колхозсен тырă авăртмали армансене халĕх дезинфекци туса ирттермеле.

Агроном Н. Кондаков.

## Йĕтĕн татса пĕтерчĕç

ХУТАРТИ (Çĕмĕрле р.) Ленин йачĕпе тăракан колхоз иртнĕ çуркунне 30 гектар çинче йĕтĕн акса хаварнăччĕ. Йĕтене лайăх пăхса тăнипе вăл вăйлăн çитĕнчĕ. Ăнса пулнă йĕтене колхозницăсем 2 кун хушшинче татса кĕчĕç. Йĕтĕн татас ĕçре О. Романăва, Й. Алексейĕва, Николайĕва, Чугунова йулташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Халь йĕтĕн çапма тытăнчĕç.

П. Йакăвлĕв.

## Çĕре сухаласа çемçетеççĕ

„ÇĔНĔ ЙАЛ" колхоз (Вăрнар р.) августăн 5-мĕшĕнче кĕрхи тырăсене çапса пĕтерчĕ. Халь колхозра сурхи тырăсене çапма тытăнчĕç.

Машинă-тракторлă станци тракторĕсем кĕрхи тырăсене акмалли участкăсене сухаласа çемçетме пуçăнчĕç.

А. Польаков.

## Пур культурăсене те парса татнă

ТАТМĂШРИ (Патăрйел р.) „Хĕвелтухăç" колхоз государствăна умĕнчи обйазательствăсене вăхăтра парса татассишĕн тăрăшса ĕçлет. Уйри тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕнĕ хыççăнах, колхоз пур культурăсем тăрăх та государствăна тырă парса татрĕ. Пуре 108 центнĕр ыраш, 40 центнĕр тулă, парçа йышши культурăсем—12 центнĕр, 58 центнĕр тĕрлĕрен культурăсем панă. Кусемсĕр пуçне машинă-тракторлă станцине 88 центнĕр натурплатă панă.

Халь колхозри бригадăсем авăн сапаççĕ, кĕрхи тырăсене акса хăварма хатĕр тăраççĕ.

Н. Квасăв.

## Кĕракине хатĕрленес ĕç начар пырат

ШĂХАСАН. ПСК(б)П Чăваш Обкоме августăн 2-мешĕнче кĕракине хатĕрленессси çинчен йышăвнă постановлени Шăхасан районне пĕтĕмешпех тивет. Вăл постановленире кăтартнă çитменлĕхсем пурте Шăхасан районĕнче те пур.

Августăн 8-мĕш тĕлне районĕпе 105 гектар кĕрхи тырăсем акмалли çĕре сухаласа пĕтермен. Çĕртмене пĕрремĕш хут сухаласа пĕтермен колхозсем те пур (Пратйакасси, Пайкильт).

Çĕртме пуссине çемçетес ĕç начар пырат. Тислĕк кăлармалли плана 89 процент çеç тултарнă. Минерал çăнăхĕсем 200 тоннă турттарса çитермен.

Вăрлăх çапса хатĕрлес плана 24 процент ытларах тултарнă. Колхозсем хушшинче 120 центнĕр суртлă вăрлăх улăштармала, анчах ку ĕç пуçланман та. Вăрлăх лаборатори ĕçлет, анчах колхозсем вăрлăхсене тĕреслеттерме илсе килмеççĕ. Вăрлăхсене вутпуççирен чуклеме кирлĕ пулакан йапаласене кӳрсе килмен. Çейăлкăсене районĕпе 90 йусамала пулсан, 50 çеç йусанă.

Ака вăхăчĕ çитсе тăрат. Çапах та районри организацисем ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн постановленине пурнăçлама кирлĕ ĕçсене тумаççĕ-ха.

Парти Обкомĕн постановленийĕ тăрăх, августăн 7-мĕшĕнче пур районсенче те колхоз председателĕсене пухса канашлусем туса иртермеле пулнă. Çавна май августăн 8-мешĕнче кĕрхи акана хатерленесси çинчен райĕçтăвком пленумĕнче сӳтсе йавреç. Анчах ку ыйтăва кирлĕ пек сӳтсе йавни пулмарĕ. Докладчик хыççăн виçĕ çын çеç тухса калаçрĕç. Вĕсем те кĕрхи ака çинчен сахал калаçрĕç. Ку пленумра пур колхоз председателĕсем те пулмарĕç.

Шăхасан районĕнчи организацисен, чи малтан парти райкомĕпе райĕçтăвкомăн тата райçĕрĕç пайĕн кĕрхи акана хатĕрленес ĕçре халех татăклă улшăну тумала.

С. Соколов.

Фашистла çĕршывсенче

Кризис хăпрăк-саватсен тăрписене пырса хупласан, тĕтĕм тупă кĕпçисенчен тухма тытăнат.

Б. Ипатăв ӳкерчĕкĕ („Пресоклише")

## Выставкă комитечĕн составĕ çинчен

### Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăнни

### ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен выставкă комитечĕн составне: А. М. Сомăв (Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ), М. А. Андрейев (Госплан председателĕ), М. И. Кольцов. (ПСК(б)П Обкомĕн йалхуçалăх пайĕн заведуйущийĕ), Г. И. Иванов (Мускаври чăваш залĕн директорĕ), Г. Мартынăв (Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн аслă агрономĕ), Н. Н. Никитин (Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Тештырă управленин аслă агрономĕ), Д. П. Иелкин (Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн аслă зоотехникĕ), К. И. Иванов (Искусствă ĕçĕсен управленин начальникĕ), В. Харитонăв (Çутĕç Халăх Комиссарĕ), Берзинь (Йалхуçалăх институчĕн профессорĕ), Остряков (Патăрйел районĕнчи „Херлĕ Туçа" колхозри орденоносеçĕ), Ксенийă Григорийĕвă (Тутаркас районĕнчи „Кр Сор...о" колхозри орденоноскă) тата Е. Чернов (Куславкка районĕнчи „Динамо" колхоз председателĕ) йулташсене çирĕплетес.

Республикăри Выставкă комитечĕн председательне К. С. Коротков йулташа, председател заместительне Г. Мартынăв йулташа çирĕплетес.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. ВОЛКĂВ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ Н. ЖУКĂВ.

Шупашкар хули, Августăн 5-мĕш, 1938 ç.

## Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче Кинофикаци Управленийĕ тăвасси çинчен

### Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăнни

### ПОСТАНОВЛЕНИ

1. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи мартăн 23-мĕшĕнче ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче Кинематографи ĕçĕсен Комитечĕ тусассухрасси çинчен йышăвнă постановленине май, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнче Кинофикаци Управленийĕ тăвас.

2. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Кинофикаци Управленин начальникне Михаил Васильевич Васильев йулташа лартас.

3. М. В. Васильев йулташа вунă кунлă срукра, управлени штачĕ тата структури менле пулмалине палăртса хума, Кинофикаци Управлени çинчен Положени туса хатĕрлесе, ăна Халăх Комиссарĕсен Советне тăратма хушас.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. ВОЛКĂВ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ Н. ЖУКĂВ.

Шупашкар хули. Августăн 5-мĕш, 1938 ç.

## Курс организацилене

ИШЛЕЙ. Райçутĕçпайĕ пуçламĕш шкулта вĕрентекен учительсен пĕлӳне ӳстерес м...ăпа пĕр уйăхлăх курс организацилерĕ. Курсра 35 учител вĕренеççĕ.

Г. Шчербаков.

## Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре, кĕранинче тата кĕрсухи тăвас ĕçре социалисăмлă ăмăрту сарса йарасси çинчен

### ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Кăнтăрти тата Центрти МТС-сен, Хĕвелтухăç йенчи МТС-сен, çĕрмамăк акса тăвакан МТС-семпе совхозсен тата çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсен профсойузĕсен Тĕп Комитечĕсем йышăнни

### ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, Кăнтăрти тата Центрти МТС-сен, Хĕвелтухăç йенчи МТС-сен, çĕрмамăк акса тăвакан МТС-семпе совхозсен тата çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсен профсойузĕсен Тĕп Комитечĕсем, Краснодар крайĕнчи Шчербиновски районĕнчи колхозниксемпе специалиссем чĕнсе каланине, сахăр кăшманĕ тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Сойузри наукăпа тĕпчев институчĕпе пĕрле сахăр кăшманĕ лартса тăвас ĕçри стахановецсем, çавăн станцисемпе йĕтĕн кантăр акса тăвакан районсенчи стахановецсем чĕнсе каланине хута кĕрсе, тырпулсене пухса кĕртес ĕçре, кĕранинче тата кĕрсухи тăвас ĕçре социалисăмлă ăмăртăва малала сарса пырас тĕлĕшпе çапла йышăнаççĕ:

1) Государствă умĕнчи обйазательствăсене кăтартусăр пурнăçласа кĕртнĕшĕн, вăйлă тырпул туса илме пултарнăшăн, тырпулсене пухса кĕртес ĕçре, кĕранинче тата кĕрсухи тăвас ĕçе кăтартуллă иртерес стахановла йуханă аллăн сарассине пысăк ӳсĕмсем тунăшăн, малта пыракан МТС-сем, совхозсем тата колхозсем валли:

а) ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн тата профсойузсен Тĕп Комитечĕсен куçса çӳрекен йалавне тăвас:

тештырă районĕсем тăрăх: МТС-сем валли—2, колхозсем валли 2, совхозсем валли—1;

кăшман акакан районсем тăрăх: МТС-сем валли—1; колхозсем валли—1;

çĕрмамăк районсем тăрăх: МТС-сем валли—1; колхозсем валли—1; совхозсем валли—1;

йĕтĕн акакан районсем тăрăх: МТС-сем валли—1; колхозсем валли—1; совхозсем валли—1;

кантăр акакан районсем тăрăх: МТС-сем валли—1; колхозсем валли—1; совхозсем валли—1.

б) Куçса çӳрекен йалав илнĕ МТС-сем, совхозсем тата колхозсем йалав илнипе пĕрлех тата çакăн пек премисем илеççĕ:

МТС-сенче, совхозсенче тата колхозсенче йалхуçалăхĕнчи тĕп ĕçсене пĕтĕмпех механизацилесе çитерме кирлĕ машинăсемпе орудисем;

МТС-сем тата совхозсем валли калаçакан кино лартнă клуб туса памала;

МТС-сене, колхозсене тата совхозсене пĕтĕмпех телефонизаци туса памала;

МТС-сене, колхозсене тата совхозсене çăмăл тата груз турттармалли автомашинăсем (куçалăх пуçне 2 шер машинă);

куçса çӳрекен йалав илнĕ МТС йе колхоз кĕрекен районсенчи специалиссемпе районри çĕрĕç пай работникĕсем валли 18 çăмăл автомашинă уйăрса хунă.

Йалав илнĕ МТС-сем тата совхозсем пурăнмалли çурт-йĕр строительстви валли 30-шер пин тенкĕ укçа илеççĕ.

в) Вăйлă тырпул туса илес ĕçре малта пыракан колхоз председателĕсене, бригадирсене, звеноводсене, агрономсене, колхозник-опытниксене, комбайнерсене, тракторĕрисене тата трактор бригадисен бригадирĕсемпе МТС механикĕсене, çавăн пекех тата МТС-сенчи, совхозсенчи тата райçĕрĕç пайĕсенчи инженерлă технилă работниксене премилеме 200 пин тенкĕ уйăрса преми памалли фонд туса хурас.

2) Социалисăмлă ăмăрту результачĕсене хаклама çакăн пек составран центрти комисси (жюри) тăвас:

1) ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ (комисси председателĕ);

2) Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкин комитечĕн председателĕ;

3) „Правда" хаçат представителĕ;

4) „Социалистическое земледелие" хаçат представителĕ;

5) „Крестьянская газета" хаçат представителĕ;

6) Хĕвелтухăç йенчи МТС-сен профсойузĕн Тĕп Комитечĕн представителĕ;

7) Кăнтăрти тата Центрти МТС-сен профсойузĕн Тĕп Комитечĕн представителĕ;

8) Çĕрмамăк акса тăвакан МТС-семпе совхозсен профсойузĕн Тĕп Комитечĕн представителĕ;

9) Çĕрĕç органĕсен профсойузĕн Тĕп Комитечĕн представителĕ;

10) В. Д. Костенко, Краснодар крайĕнчи Шчербиновски районĕнчи партин XVII мĕш съесĕ йачĕпе тăракан колхоз бригадирĕ, РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ;

11) И. Куракин, Ростов облаçĕнчи Азовски МТС директорĕ;

12) П. Н. Ангелина, ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ, Сталински облаçри Старо-Бешево районĕнчи трактăр бригадин бригадирĕ;

13) А. И. Оçкин, ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ, Оренбург облаçĕнчи Илекски МТС комбайнерĕ, К. А. Тимирйазев йачĕпе тăракан йалхуçалăх академийĕнче вĕренекен студент.

3) Республикăсенчи çĕрĕç халăх комиссариачĕсене, облаçсенчи (крайсенчи) тата районсенчи çĕрĕç органĕсемпе, МТС, совхоз директорĕсене тата профсойузсен облаçсенчи комитечĕсене социалисăмлă ăмăртăва йалан оперативлă йертсе пыма тата унăн результачĕсене учота илсе пыма хушас.

Социалисăмлă ăмăрту итогне 1939 çулхи йанварĕн 1-мĕшне туса çитермеле.

* * *

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата Кăнтăртипе Центрти МТС-сен, Хĕвелтухăç йенчи МТС-сен, çĕрмамăк акса тăвакан МТС-семпе совхозсен, çĕрĕç органĕсенчи работниксен профсойузĕсен Тĕп Комитечĕсем колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-сенчи тата совхозсенчи рабочисене, çĕрĕç органĕсенчи инженерлă техникла работниксене сталинла 7—8 миллиард пăт тыррăшăн, мĕн пур культурăсен тухăçне ӳстерессишĕн, йалхуçалăх производствине кăтартуллă организацилессишĕн, Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕç илессишĕн социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йама чĕнеççĕ.

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ И. Бенедиктăв.

Кăнтăрти тата Центрти МТС-сен профсойузĕн Тĕп Комитечĕ—П. Петровский.

Хĕвелтухăç йенчи МТС-сен профсойузĕн Тĕп Комитечĕ—И. Каторгин.

Çĕрмамăк акса тăвакан МТС-сен тата совхозсен профсойузĕн Тĕп Комитечĕ—А. Романăв.

Çĕрĕç органĕсенчи работниксен профсойузĕн Тĕп Комитечĕ—В. Хоритский.

1938 ç. августăн 8 мĕшĕ.

## КИНО

### „Китай дает отпор"

Америкă операторĕ ӳкернĕ „Китай дает отпор" йатлă фильма Шупашкарти кинотеатрта кăтартрĕç. Ку фильм авторĕ Китайра хăй пулнă. Вăл çав фильмра 400 мĕлйунлă Китай халăхĕ Йапони захватчикĕсене хăйлă отпор пама хатĕрленнине уççăн кăтартса панă.

Йапони çарĕсем иртсе кайакан вырăнсенче пур çĕрте те йунлă йĕр йулат. Йапонецсем мирлĕ халăха—хӳтлĕхсĕр хĕрарăмсене, пĕчĕк ачасене, ват çынсене пине-пинĕпе вĕлереççĕ. Йапони бомбардировщикĕсем Китай хулисемпе йалĕсене бомбă пăрахса çунтара-çунтара йараççĕ. Йапони самурайĕсем Китайра сăнчăртан вĕçерĕнсе кайнă урнă йытăсем пек асса сӳреççĕ. Çак ирсĕр бандитсене курсан кино курса ларнă çĕртех чĕре тулли тарăхупа шартлайсă кайатăн.

Анчах Китай халăхĕ, хăйĕн наци тивĕçлĕхне ăнланса илнĕскер, Йапони захватчикĕсене отпор пама çĕкленет. Китайри коммунисла парти тăрăшнипе нацилĕ пĕрлĕх фрончĕ тĕрекленсе пырат. Акă Китай халăхĕн çулăмлă трибунĕ, компарти çулпуçĕ, легендарлă полководец Чжу-Де хĕрӳлĕ сăмах калат, вăл Китайра граждăн вăрçи пĕтни çинчен пĕлтерет, пĕтĕм халăха пĕрлĕх фронтне пĕтĕçме чĕнет. Куитах епĕр Мао Цзе-дуна. Тĕп правительствă пуçлăхне Чан Кай-шине те куратпăр. Аслă шкулсенчи студентсем, рабочисем, хресченсем хăйсен ирĕкĕпе çара кайаççĕ. Китай халăхĕн пĕрлĕхлĕ командовани йертсе пыракан хăватлă çарĕ ӳссе тĕрекленет. Китай çарĕн халь ĕнтĕ хăйĕн хăватлă самолотсем, артиллери, бронемашинăсем, пулеметсем пур. Вăл самолотсем ирсĕр йапонецсене хирĕç хăйуллăнах çапăçăва тухаççĕ. Акă Йапони самолочĕсем çĕре тăтăла-тăтăла анаççĕ. Китайăн регулярлă çарĕсем тата партизан отрйачĕсем йапонецсене пысăк сухатусем кӳреççĕ. Китай халăхĕ вăранчĕ. Йапони захватчикĕсене хуйхă пулĕ!

Кино курнă хыççăн Китай халăхĕ Йапони захватчикĕсене хăйĕн çĕрĕ çинчен пуçĕпех шăлса ывăтассă тата ытларах ĕненетĕн.

С. КОНСТАНТИНАВ.

## Пĕлтерни

Августăн 15-мĕшĕнче Чебторг çуртĕнче (Кадыков урамĕ, 5-12) каçхине 6 сехетре МОПР йачейки çекретарĕсен тата МОПР активĕн пухăвĕ пулат. Ыйтусем: авиаци кунĕ пирки тата МОПР уставĕн пройектне сӳтсе йавасси.

Обйазательнă пымала.

МОПР хула комитечĕ.

## Чăваш АССР-ĕн Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар хула совечĕ пĕлтерни

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар хула совечĕ 1917—1918 çулсенче çуралнă призывниксен, иртнĕ призывсенче чирлĕ пирки тата ытти сăлтавсемпе отсрочкă илнисен пĕтĕм хулари конференцине ирттерет.

Конференци Чăваш АССР Çар комиссариачĕн Сборнăй пунктĕнче августăн 14-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре уçăлат.

Конференци кун йĕрки: ССР Сойузĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕ тата çитес призывăн задачисем çинчен.

Призывниксен конференцине пурин те обйазательнă пымала.

ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔ.

Утверждено Бюро ЦК ВЛКСМ от 11-VII-1938 г., прот. № 103, пункт 12.

## ТЕМА

### для доклада и бесед к 20-летию Ленинско-Сталинского комсомола

**I. В. И. Ленин. «Задачи союзов молодежи». Речь на III съезде РКСМ.**

Собр. соч., т. XXX, стр. 403 — 40? (читка и раз'яснение).

**II. И. В. Сталин. Речь на VIII Всесоюзном съезде ВЛКСМ.**

Ленин — Сталин. Однотомник избранных произведений, стр. 692 — 698 (читка и раз'яснение).

**III. Письмо т. Иванова и ответ т. Сталина.**

«Правда» от 14 февраля 1938 г. (читка и раз'яснение).

**IV. Положение трудящейся молодежи в царской России.**

Литература:

**К. Маркс.** «Капитал», т. I, гл. XIII, стр. 299—306, изд. 1931 г.

**В. И. Ленин.** Развитие капитализма в России. Собр. соч., т. III, стр. 173—174, 222—223.

**В. И. Ленин, И. В. Сталин** «О молодежи». Партиздат, 1936 г., стр. 10—14, 17—19, 36, 56—57, 74, 96—99, 127.

**В. И. Ленин.** Собр. соч. т. I, стр. 417—421, т. II, стр 572—573, т. V, стр. 347, т. VII, стр. 102—103, 148—150, т. XVI, стр. 477 — 479, т. XXI, стр. 319—320.

**«ВКП(б) в резолюциях»**. Партиздат, 1936 г., стр. 31—32, 268.

**А. В. Косарев.** «Сталинская Конституция и советская молодежь» (гл. II, III, IV). «Молодая гвардия» 1938 г.

**«Трудящаяся молодежь в борьбе против царизма»**. Журнал «Юный коммунист» № 8 за 1937 г.

**V. ПАРТИЯ ЛЕНИНА — СТАЛИНА — ОРГАНИЗАТОР И РУКОВОДИТЕЛЬ ЛЕНИНСКО-СТАЛИНСКОГО КОМСОМОЛА.**

Литература:

**В. И. Ленин, И. В. Сталин** «О молодежи». Партиздат, 1936 г., стр 36—37, 133—151, 177—188, 195—203.

**В. И. Ленин.** «Проект резолюции об отношениях к учащейся молодежи». Собр. соч., т. VI, стр. 7.

**В. И. Ленин.** «Задачи союза молодежи». Речь на III съезде РКСМ. Собр. соч., т. XXX, стр. 403—417.

**И. В. Сталин.** «О задачах комсомола». Ответ на вопросы редакции «Комсомольской правды» («Вопросы ленинизма», 9-е изд., стр 186—190 или Ленин — Сталин. Однотомник избранных произведений, стр. 688—692).

**И. В. Сталин.** Речь на VIII Всесоюзном съезде ВЛКСМ (Ленин—Сталин. Однотомник избранных произведений, стр. 692—698).

**И. В. Сталин.** «Вопросы ленинизма» 10-е изд. («К вопросам ленинизма», гл. V, стр. 113—117).

**И. В. Сталин.** О недостатках партийной работы и мерах ликвидации троцкистских и иных двурушников. Доклад и заключительное слово на пленуме ЦК 3—5 марта 1937 г. Госполитиздат 1938 г.

**Письмо т. Иванова и ответ т. Сталина.** «Правда» от 14-II-38 г.

**А. А. Андреев.** «Коммунистическое воспитание молодежи и задачи комсомола». Речь на X съезде ВЛКСМ. «Молодая гвардия», 1938 г.

**«ВКП(б) в резолюциях»**. Партиздат 1936 г., т. 1, стр. 268, 319—320, 373, 452—454, 532—534, 662—630, т. II, стр. 71—80, 404—405.

**Программа и устав ВЛКСМ** (вводная части).

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ

Чувашский республиканский Комитет Союза работников начальной и средней школы

с прискорбием извещает о преждевременной и трагической смерти директора Больше-Токшиковской НСШ, Татаркасинского района

**Платонова Алексея Максимовича,**

последовавшей 13 августа и выражает глубокое соболезнование родным и знакомым покойного.

Чувашский Обком Союза работников начальной и средней школы.


## 1938—1939 ВĔРЕНУ ÇУЛĔНЧЕ

### Чăваш республикинчи политикăлă çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлененсен шкулĕ

### 1-мĕш КУРСА ВĔРЕНМЕ ИЛЕТ

Шкулта 3 çул вĕренмеле. Политикăлă çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекенсен шкулĕ районти культурă çуртĕсем валли, районти çутĕç пайĕсем, вулав çуртĕсем тата колхоз клубĕсенче ĕçлеме квалификациллĕ работниксем хатĕрлет.

Шкула 18 çултан пуçласа 35 çулхисем тарах илеççĕ. Вĕренме вĕренекенсен пĕлӳлĕ тулнимăр вăтам шкулта вĕренни чухлĕ пулмала тата политсут ĕçĕпе пропагандă ĕçĕн опычĕ пулмала.

Шкула кĕрес текенсен пурин те заявленисене августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 1-мĕшчен Шупашкарти Педучилищĕ директорне прамала. Заявленипе пĕрле çакăн пек документсем пулмала:

а) Автобиографи,

б) Тулнимăр вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат,

в) Сывлăх çинчен справкă,

г) Икĕ фото-ӳкерчĕк

Вĕренме кĕрекенсен тулнимăр вăтам шкул программипе вăçăкне çакăн пек предметсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕнче пулмала:

а) Вырăс чĕлхипе (çырупа тата сăмахпа),

б) Чăваш чĕлхипе (çырупа тата сăмахпа),

в) Арифметикăпа (çырупа тата сăмахпа),

г) Политграмотăпа (сăмахпа).

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем сентябрĕн 1-мĕшĕнчен 1[illegible]-мĕшĕччен пыраççĕ.

Шкулта вĕренекенсене пурне те уйăха 200-шер тенкĕ стипенди тӳлеççĕ.

Адрес: г. Чебоксары, ул-ца Карла Маркса, дом № 84, Педучилище.


Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 885.

Уполномоченный Главлита № 445